# Аслă Ҫĕнтерӳпе саламлатпăр!

Муркаш район хаҫачĕ

# Ҫĕнтерӳ ялавĕ

1944 ҫулхи ҫу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

34 (7995) № * Шăмат кун, 2012 ҫулхи ҫу (май) уйăхĕн 5-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ


## Ҫĕнтерĕве ҫывхартнисене – пысăк тав!

Майăн 9-мĕшĕ – Ҫĕнтерӳ кунĕ

Ҫул хыççăн ҫул каять, акă Аслă Ҫĕнтерӳ тунăранпа 67 ҫул ҫитрĕ те. Йывăр сурансем вара ҫаплах сипленмеççĕ-ха. Шел, вăрҫа хутшăннисен шучĕ ҫулсеренех сахалланса пырать. Паянхи кун района вăрҫа хутшăннисемпе инвалидĕсем 77 ҫын, вăрҫăра вилнĕ салтаксен арăмĕсем 6-ăн, "вăрҫă ачисем" 1400 ҫын пурăнать. Вĕсем умĕнче эпир пуç тайма тивĕç. Ҫутă та мирлĕ пурнăç – вĕсен тивлечĕ.

Тăван ҫĕр-шыва хӳтĕлеме районтан 9845 ҫын тухса кайнă. Синкер вăрҫа пула 5491-шĕн пурнăçĕ вăхăтсăр татăлнă, вĕсем ҫапăçу хирĕнче юлнă. Тăван ҫĕршыва хӳтĕлесе пуçĕсене хунисем яланах пирĕн асăмра пулĕç.

Майăн 4-мĕшĕнче района Аслă Ҫĕнтерĕве ҫывхартма хутшăннă хисеплĕ ҫынсене чысларĕç. Чи малтанах пухăннисене район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев саламларĕ.

– Хисеплĕ ветерансем, эсир ыррине кăна тивĕç. Хӳтлĕхпе тимлĕх сире валли яланах ҫиттĕр. Эсир ҫутă пуласлăхшăн шыва та, вутта та кĕнĕ. Тăван ҫĕр-шыва хастар хӳтĕлесе Аслă Ҫĕнтерĕве ҫывхартнă, тăшмана тĕпрен аркатнă. Паян вара эсир пирĕн вĕрентекенсем, – терĕ Р. Тимофеев.



Ҫавăн пекех фронтовиксене республикари ҫар комиссариачĕн Муркашра Элĕк районĕсенчи пайĕн ертӳҫи А. Кочуров саламларĕ. Вăл хăйĕн сăмахĕнче хальхи ҫамрăксем те тĕрлĕ ҫапăçусенче аслисен паттăрлăхне кăтартнине палăртрĕ.

Ветерансен районти канашĕн ертӳҫи Мария Виноградова вара хăй ачалăхне аса илчĕ.

– Эпĕ вăрҫă пуçланнă чухне пĕчĕк ача кăна пулнă-ха. Ҫимелли ҫукчĕ, ҫăкăр татăкĕ, ҫĕр улми тăраничен ҫиесси ĕмĕтре кăна пулнă. Паянхи ҫителĕклĕ пурнăç тем тесен эсир тăрăшнипе пулнă, – аса илчĕ нушалла вăхăтсене хисеплĕ ветеран.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: Шурчари Г.Савельев тата Юнкăри Г. Илугин фронтовиксем.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

Кĕскен

## Вăрмансене кĕртмеççĕ

Мари Эл правительствин ятарлă йышăнăвĕпе апрелĕн 27-мĕшĕнчен пуçласа майăн 10-мĕшĕччен пушар тухассинчен асăрханма республикăра тимлĕх йĕрки туса хунă.

Ҫак тапхăрта кунти вăрмансене ирĕккĕн кĕрсе ҫӳреме чарнă.

Аслă Ҫĕнтерӳ уявĕ

## Тивĕçлипе паллă тăвăпăр

Пирĕншĕн, пĕтĕм ҫĕр-шыв ҫыннисемшĕн тата прогрессивлă этемлĕхшĕн питех те пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăракан Аслă Ҫĕнтерӳ кунне кăçал 67-мĕш хут уявлама хатĕрленетпĕр. Ҫапла, ҫул хыççăн ҫул иртĕ, вăрçă кунĕсем кайран кая юлса пырĕç, анчах та ҫак Ҫĕнтерĕвĕн пĕлтерĕшĕпе сумĕ нихăçан та иксĕлмĕ.

Ҫĕнтерӳ кунне пур ял тăрăхĕсенче те паллă тăваççĕ. Уяв митингĕсене ятарлă графикпа вырăнсенче майăн 8 – 9-мĕшĕсенче ирттерме палăртнă. Ҫав кунсенче вăрçă участникĕсене, вăрçă инвалидĕсемпе тыл ĕçченĕсене, салтак арăмĕсене савăнăçлă лару-тăрура чысласçĕ.

Район центрĕнче уяв митингĕ майăн 9-мĕшĕнче пулать, 10 сехетре пуçланать. Программăра: ҫамрăк армеецсен парачĕ, литмонтаж, ачасен пултарулăх номерĕсем, Ҫĕнтерӳ паркĕнче палăк патне чечек кăшăлĕсем хурасси т. ыт. те.

## Шкулсен сăн-сăпачĕ улшăнĕ

Вĕрентӳ сферинче

***Ҫитес вăхăтра республикăри шкулсенче юсав ĕçĕсем пуçланмалла. Ҫакăн валли пирĕн района та сахал мар укçа-тенкĕ уйăрса параççĕ. Унăн пысăк пайĕ федераллă бюджетран килет, ытти – вырăнти бюджетран. Кун пирки хаçатра пĕлтернĕччĕ ĕнтĕ.***

***Пирĕн районта юсав ĕçĕсем хăш шкулсенче пулаççĕ-ха? Ыйтăва район администрацийĕн вĕрентӳ, ҫамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн ертӳҫи З. ДИПЛОМАТОВА хуравлать:***

– Шкулсенчи юсав ĕçĕсене пурнăçласси икĕ программăпа пулса пырать. Пĕрремĕшĕ пĕтĕмĕшле вĕрентĕвĕн тытăмне ҫĕнетессин комплекслă мерисене пурнăçлассипе ҫыхăннă. Ҫак программăпа юсав ĕçĕсене пурнăçлама укçа-тенкĕ федераллă тата вырăнти бюджетсенчен куçать. Муркашри вăтам шкулăн ҫивиттине юсама, шыв пăрăхĕсемпе канализаци тытăмне юсаса ҫĕнетме палăртнă. Шетмĕпуçĕнчи тĕп шкулта та юсав ĕçĕсем пысăк калăпăшлă пулмалла. Унта шкулăн ҫивиттине, чӳрече блокĕсене ҫĕнетмелле, пандус тумалла. Кунсăр пуçне тата ҫуртăн тул енчи стенисем те тимлĕх ыйтаççĕ. Нискассинчи вăтам шкулта та чӳрече блокĕсене улăштарас ыйтăва татса парăпăр. Кунта та пандус тума палăртнă. Москакассинчи вăтам шкулта ҫивитти юсаса ҫĕнетмелле. Ҫак пысăк ĕçсене туса ирттерме пурĕ 8 миллион та 783 пин тенкĕ уйăрнă, вăл шутра вырăнти бюджетран – 1 миллион та 756 пин тенкĕ.

Тепĕр программа – пилотлă программа: «Комплексная компактная застройка сельских поселений». Ăна республика тата вырăнти бюджетсенчен финансласçĕ. Ҫав программăпа пăхса хунă укçа-тенкĕрен Катькасри пуçламăш шкул – ача сачĕн тата Юнкă ял тăрăхĕнчи «Рябинушка» ача сачĕн ҫурт тăрлăртнă. Ку программăпа юсав ĕçĕсене пурнăçлама пурĕ 2 миллион та 502 пин те 200 тенкĕ палăртнă, вĕсенчен 1 миллион та 251 пин те 100 тенкĕ – вырăнти бюджетран.

Юсав ĕçĕсене пурнăçлас тĕллевпе аукционсем ирттерме хатĕрленетпĕр. Май уйăхĕнче подрядчиксене палăртса вĕсемпе килĕшӳсем тумалла. Ĕçсем кашни объектра пĕр кунтах пуçланмаççĕ, ҫапах та вĕсене малтанласа августăн 15-мĕшĕ тĕлне вĕçлеме палăртнă.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Ҫур аки – 2012

## Ака вăй илсе пырать

**Районти ҫĕр ĕçченĕ ака уйăхĕн юлашки кунĕсенче ака агрегачĕсене хире кăларчĕ те паян ҫуртрисем акас ĕç кунсерен вăй илсе пырать. Ял хуҫалăх производство кооперативĕсемпе агрофирмăсен тата хресчен (фермер) хуҫалăхĕсен кăçалхи ҫур акире уй-хир ĕçĕсен планĕпе килĕшӳллĕн пурĕ 11615 гектар акса хăвармалла. Ĕнерхи кун тĕлне тĕрлĕ харпăрлăх формиллĕ хуҫалăхсем типсе пыракан уй-хирсене пурĕ 255 гектар акса хăварма ĕлкĕрнĕ. Вăл шутран: ҫурхи тулă – 180 гектар, урпа – 68 гектар, сĕлĕ – 7 гектар.**

**Ҫак вăхăта хуҫалăхсем ҫур аки ĕçĕсем ирттерме 1062 гектар (7 процент) ҫĕр хатĕрленĕ.**

**Хамăр инф.**

Ĕçпе тивĕçтерекен центрта

## Тавралăха тирпей-илем кĕртрĕç

Районти ĕçпе тивĕçтерекен центра ҫулталăк пуçланнăранпа ĕç тупса пама ыйтса 359 ҫын пынă. Вĕсенчен 185-шĕ – 14–18 ҫулхи ҫамрăксем – вĕренӳрен пуш вăхăтра ĕçлеме килĕшнине пĕлтернĕ. Ҫапла вара ĕçпе тивĕçтерекен центр Муркашри, Чуманкассинчи, Йӳçкассинчи, Юнкăри, Москакассинчи вăтам шкулсемпе тата Муркашри лицейпа килĕшӳсем туса вĕренекенсене тавралăха тирпей-илем кĕртес ĕçе хутшăнтарнă.

Центрти специалистсем шкул ачисене ĕçпе тивĕçтерес ыйтăва пăхса тухнă чух малтанах тулли мар ҫемьесенче, нумай ачаллă ҫемьесенче ӳсекенсене тата ниҫта та ĕçлемен ашшĕ-амăшĕсен ачисене ĕçе явăçтарма тăрăшаççĕ. Пĕчĕк тупăшлă ҫемьесенчи ачасене те, районти ҫул ҫитменнисемпе вĕсен прависене хӳтĕлекен комисси учетĕнче тăракан ҫамрăксене те айккинче хăвармаççĕ.

Ачасем вĕренӳрен пуш вăхăтра хăйсене валли укçа ĕçлесе илни воспитани енчен те паха, ашшĕ-амăшне те пулăшу.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Саламлатпăр



Пирĕн юратнă мăшăр, хисеплĕ атте, асатте, хуньăм – Исетеркkĕ ялĕнче пурăнакан **Николай Андреевич АНДРЕЕВ** – майăн 8-мĕшĕнче 75 ҫул тултарать, ҫав ятпа ăна чун-чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Эсĕ пурри пирĕншĕн – пысăк телей, савăнăç. Ырлăх-сывлăх, иксĕлми телей, вăрăм кун-ҫул сунатпăр. Эпир сана пурте юрататпăр, хисеплетпĕр. Тавтапуç сана пуриншĕн те.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕсемпе кинĕсем, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕсем, ҫывăх тăванĕсем.**

Хаклăран та хаклă ҫыннăмăра, юратнă пиччене, куккана, тăвана – Исетеркkĕ ялĕнче пурăнакан **Николай Андреевич АНДРЕЕВА** – 75 ҫулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Сывлăху сан ҫирĕп пултăр, кун-ҫулу вăрăм килтĕр, чир-чĕр ҫывăха ан пытăр. Тавах сана ырă кăмăлушăн. Тăван ăшши – хĕвел ăшши, ăшра яланах тăванла калană ырă, ăшă, лайăх сăмахсем пулччăр. Эпир сана юрататпăр, санпа мухтанатпăр, эс пурришĕн савăнатпăр. Ырă кăмăлу, ĕçченлĕхӳ пирĕншĕн яланах ырă тĕслĕх пулĕ.

Ҫак кунсенче аслă ывăлĕн Петьăн ҫуралнă кунĕ пулчĕ. Ăна та тăванла ăшшăн саламлатпăр, ырлăх-сывлăх, иксĕлми телей сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: йăмăкĕсем, вĕсен ачисем, мăнукĕсем тата ҫывăх тăванĕсем, Петровсен, Никитинсен ҫемйисем.**

Оринин шкулĕнче техслужащире ĕçлекен **Юлия Николаевна МАКСИМОВĂНА** сумлă юбилейпа чун-чĕререн саламлатпăр. Юман пек ҫирĕп сывлăх, вăрăм кун-ҫул, ҫăл куç пек тапса тăракан вăй-хал, иксĕлми телей сунатпăр. Ырă кăмăлушăн, ĕçченлĕхӳшĕн хисеплетпĕр сире. Сĕтелĕр ҫăкăр-тăвартан, кил-ҫуртăр тăван-хурăнташран ан татăлтăр.

**Оринин шкул коллективĕ.**

Ҫырăнтару – 2012

## ХАКЛĂ ВУЛАКАНĂМ!

**Районти «Ҫĕнтерӳ ялавĕ» хаҫата июльтен илсе тăма малалла ҫырăнтараççĕ. 6 уйăха ҫырăнмалли хак – 204 тенкĕ.**

**Вулакансене пĕлтернĕччĕ, июль уйăхĕнчен шăмат кунсенчи кăларăм унччченхи пек 6 страницăпа мар, 8 страницăпа тухма пуçлать.** **Райхаçат редакцийĕ.**

# Вăрçă хыççăн тепĕр 5 çултан

## Сăн ўкерчĕк каласа парать

***Юнкă тăрăхĕ Аслă Отечественнăй вăрçă хирне 714 çынна ăсатнă. Вĕсенчен çурри ытла каялла таврăнайман. 319-ăн çĕнтерўпе тăван яла килнĕ. Апла пулин те чылайăшĕ вăрçă суранĕсене пула вăхăтсăр çĕре кĕнĕ. Паян пурăнакан вăрçă ветеранĕсенчен пĕри – Михаил Федорович Трифонов (сăн ўкерчĕкре сылтăмри).***



Михаил Трифонов Кăпас ялĕнче 1925 çулхи ноябрĕн 17-мĕшĕнче çуралнă. 6 ачаллă çемьере вăл тăваттăмĕш пулнă. Виççĕшĕ пĕчĕклех çĕре кĕнĕ.

Михаил хавас ача пулнă. 8 çул тултарсан Çармăçкасси шкулĕнче вĕренме пуçăннă. 5 çул хушши чиперех вĕреннĕ. Кайран вăрçă пуçăннă...

1943 çулхи январĕн 12-мĕшĕнче 18 çул тултарман каччăна ялти ытти яшсемпе пĕрле çара илеççĕ. Çар чаçĕсем йĕркелекен пункта лекет. Михаил Федорович каласа панă тăрăх, вĕсене ун чухне салтак форми паман. Вăл яттисемпе пĕрле хăйне фронта яма ыйтать. Анчах та çул ситмен майĕпе унăн ыйтăвне тивĕçтермеççĕ.

1944 çул вĕçĕнче вĕсен чаçне Хабаровскри çуллахи лагере ăсатаççĕ. Унта вăл наводчик пулса тăрать. Харбин хули патĕнче пĕрремĕш çапăçусене хутшăнать. Фронтра лару-тăру çăмăлах пулман. Çар чаçĕсем пысăк çухатусем тўсеççĕ. Вĕсен взводĕ Маньчжурирен инçех мар вырнаçнă пулнă.

1945 çул, çу кунĕсем... Çапăçусенчен пĕринче вĕсене пулеметчик тăтăш персе тăма тытăнать. Вĕсем задани илеççĕ: «Пулемет расчетне тĕп тумалла!» Хыççăн тăрук инçе те мар снаряд сирпĕнет. Михаила контузи пулать, çĕр хупласа хурать. Юлашки вăйне пухса вăл хăйне пулăшма чĕнет. Инçех мар пулнă санинструктор ăна çапăçу хирĕнчен илсе тухать.

Часах вăрçă чарăнать. Акă ĕнтĕ вăл – Çĕнтерў! Кашнийех мĕн чухлĕ кĕтнĕ ăна. Çĕнтерўшĕн, Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕшĕн, çĕр çинчи пурнăçшăн пĕтĕмпех пама хатĕр пулнă вĕт-ха, пурнăçĕсене те шеллемен.

Çак Çĕнтерĕве епле хавас кăмăл-туйăмпа кĕтсе илнĕ пулин те, чылайăшне хăйсен çемйисемпе, тăванĕсемпе, ял-йышпа часах тĕл пулма шăпа пўрмен-ха.

1945 çулхи декабрь уйăхĕнче М.Ф. Трифонов службăра тăнă чаçе Лăпкă океан флотне куçараççĕ. Вĕсен экипажĕ кунта складсене хураллама пуçăнать. Тинĕс çар çыннисен çипуçĕпе тивĕçтереççĕ. Вăрçă хыççăн 5 çул хушши кунта службăра тăрать пирĕн ентеш.

Михаил Трифонов 1950 çулта кăна тăван яла таврăнать. Акă ĕнерхи çар çынни паян тăван ял тăрăх утать. Аллинче чăматан, шинель. Палланă çынсене курсан хăй куççульне тытса чараймасть. Ку вăл – савăнăç куççулĕ.

Çав çулах Михаил Федорович авланать, ялти лайăх хĕрпе çемье йĕркелет. Магазинра ĕçлеме пуçăнать. 1956 çулта Нискасси ялĕнче Ярославка ялповĕн товаровечĕ пулса тăрать. Район системинче 20 çул ĕçленĕ хыççăн 1975 çулта лесникра тăрăшма тытăнать. Тивĕçлĕ канăва тухсан та алă усса ларма шутламасть, 1992 çулччен ĕç пăрахмасть.

1969 çулта унăн мăшăрĕ çĕре кĕнĕ пулин те, фронтовик алă усман, 4 хĕрпе 2 ывăлне пăхса ўстерсе ура çине тăма пулăшнă. Вăрçă ветеранĕн Хисеп грамотисем, тĕрлĕрен наградăсем сахал мар.

Михаил Федорович пурнăç çулне тишкернĕ май çапла калас килет: вăрçă, темĕнле хăрушă та тискер пулнă пулин те, унăн юрату, ырăлăха туяс, илемлĕхпе савăнас, малашлăха шанчăкпа пăхас туйăмне пусарайман.

**Н. СИЛЬВЕСТРОВА.**
**И. ВЕТЛУГИНА.**

## Майăн 9-мĕшĕ – Çĕнтерў кунĕ

**ХИСЕПЛĔ ЕНТЕШĔМĔРСЕМ!**

Сире Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче çĕнтернĕренпе 67 çул çитнĕ ятпа чĕререн саламлатăп!

Çак халиччен курман пысăк йывăрлăх вуншар миллион çын пурнăçне татнă. Çапах та Çĕр-шывăмăра хўтĕлеме ватти-вĕттипех кар тăнă пирĕн халăх пĕтĕçўлĕхпе çирĕп кăмăл, паттăрлăх тата Çĕр-шыва чунтан юратни кирек мĕнле тăшмана та çĕнтерме пулăшнине ĕнентермелле кăтартса панă.

Эпир, çĕнтерўçĕсен тăхăмĕсем, тĕнчери тăнăçлăха, çĕршывăмăрăн никама пăхăнманлăхне сыхласа хăварнă, килес ăрусемшĕн ирĕклĕ пурнăç çĕнсе илнĕ çынсен паттăрлăхне нихăçан та манас çук, вĕсен фронтри тата тылри паттăрла ĕçĕсене яланах сăваплăн сума сăвăпăр!

Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин урокĕсене асăмăрта упранă май, эпир паян çĕр-шывăмăрăн тăнăçлă пуласлăхне шанчăклăн хураллатпăр! Тăван çĕр-шыва юратасси, хисеплесси, хўтĕлесси, Аслă Патшалăх гражданинĕн ятне тивĕçлĕ пуласси – пирĕнтен кашнийĕн таса тивĕçĕ.

Чăваш Енре ветерансемшĕн тăрăшасси çине уйрăмах тимлĕ пăхатпăр. Шел те, вăхăт чарăнусăр, пирĕн хушăра çав паттăрла çулсенчи пулăмсене хăй куçĕпе курнă çынсен шучĕ çулсерен сахалланса пырать. Пирĕн тĕп тĕллев – вĕсене пур енлĕн пулăшасси. Çĕре çити тайма пуç сире, паттăрсем! Вăрçăри паттăрлăхшăн тата мирлĕ пурнăçри ырми-канми ĕçĕршĕн чунтан тав тунине йышăнсамăр.

Çирĕп сывлăх, ырлăхпа телей, çĕкленўллĕ кăмăл-туйăм тата вăрăм кун-çул сунатăп!

Çĕнтерў уявĕ ячĕпе!

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ**
**М. ИГНАТЬЕВ.**

**АСЛĂ ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ ВĂРÇĂ ВЕТЕРАНĔСЕМ, САЛТАК АРĂМĔСЕМ, ТЫЛ ĔÇЧЕНĔСЕМ, ВĂРÇĂ АЧИСЕМ, ЕНТЕШĔМĔРСЕМ!**

Сире Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче Аслă Çĕнтерў тунăранпа 67 çул çитнĕ ятпа пĕтĕм чунтан саламлатăп.

Çулсем иртнĕçемĕн çак кун пĕлтерĕшĕ ўссех пырать. Мĕн чухлĕ юн юхрĕ вăрçă хирĕнче. Хăвăрăн пурнăçăра шеллемесĕр тăшмана çапса аркатрăр. Çапла майпа Тăван çĕршывăмăра ирĕклĕхĕпе чысне, никама пăхăнманлăхне сыхласа хăвартăр. Ытти çĕр-шыв çыннисемпе пĕрле Европăри нумай халăха фашизмăн пусмăрĕнчен хăтартăр. Тавах сире Аслă Çĕнтерўшĕн, çĕр çине мирлĕ пурнăç илсе килнĕшĕн.

Тылра та çăмăл пулмарĕ вăрçă вăхăтĕнче: ватти-вĕтти кунне-çĕрне, канăçа пĕлмесĕр ĕçлерĕ. Вĕсем тăрăшуллă ĕçпе тăшмана çапса аркатма, Çĕнтерĕве çывхартма пулăшрĕç.

Хаяр вăрçă кашни çемьере, кашни çын пурнăçĕнче тўрленейми суран хăварчĕ. Пирĕн районтан çак хăрушă вăрçа 9845 çын тухса кайнă. Вĕсенчен 5491-шĕ каялла таврăнаймарĕç. Çул хыççăн çул иртнĕ май Çĕнтерўпе киле таврăннă салтаксен йышĕ те сайралса пырать. Паян районта 75 вăрçă ветеранĕ, вĕсемпе танлаштарнисем 7-ĕн, вăрçăра вилнĕ салтаксен мăшăрĕсем 6-ăн, блокадăри Ленинградра пулнисем 2-ĕн, тыл ĕçченĕсем 1426-ăн пурăнаççĕ. Тăван çĕр-шывăн, çĕр çинчи таса тўпешĕн пуçне хунă, киле Çĕнтерўпе таврăннă салтаксене, тылри ĕç паттăрĕсене эпир нихăçан та манмастпăр. Вĕсен ячĕсем ĕмĕрлĕхех чĕрере юлĕç. Вĕсен ĕмĕтне çĕре çити пуç таятпăр. Тавах сире Аслă Çĕнтерўпе паянхи телейлĕ пурнăçшăн.

Паян пирĕн миллионшар çын пурнăçĕпе çĕнсе илнĕ мирлĕ пурнăça сыхласа хăварас тесе хамăртан килнине йăлтах тумалла. Муркаш районĕ, Чăваш Республики, тăван çĕршыв кунран кун пуянланса, аталанса пытăр тесе пĕр тĕллевпе тăрăшса ĕçлемелле. Çитĕнекен ăрăва тивĕçлĕ воспитани парса ўстермелле. Вĕсем те сирĕн пекех маттур та яваплăха туйса ўсчĕр тесе тăрăшмалла.

Хаклă ентешĕмĕрсем! Пурсăра та çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, телей сунатăп. Сывăх çыннăрсем çумра пулни вăйхал парса тăтăр.

**Район администрацийĕн пуçлăхĕ**
**Р. ТИМОФЕЕВ.**

**ТĂВАН ÇĔР-ШЫВĂН АСЛĂ ВĂРÇИН УЧАСТНИКĔСЕМ, ТЫЛ ĔÇЧЕНĔСЕМ, ВĂРÇĂ АЧИСЕМ!**

Хисеплĕ юлташсем!

Пире пурне те пĕрлештерсе тăракан аслă уявпа – Çĕнтерў кунĕпе – сире чĕререн саламлатпăр. Çак уяв кашнинех питĕ çывăх. Вăл пирĕн Тăван çĕр-шывăн вăйне, халăхăн мăнаçлăхне, историне çирĕплетсе парать.

Пирĕн районтан фронта 9845 çын тухса кайнă, вĕсенчен 5491-шĕ киле таврăнайман.

Вăрçăн йывăр çулĕсем малашлăхшăн хаклă урок пулса тăраççĕ. Паттăрлăхпа чăтăмлăх, ĕçпе ответлăх, халăхсем хушшинчи туслăх кăна пур йывăрлăха та çĕнтерме пулăшнине эпир тепĕр хут туйса илетпĕр. Вĕсенче – çĕршывăн хăрушсăрлăхĕпе аталанăвĕ.

Пуç хунисене – ĕмĕрлĕх мухтав! Чыс та хисеп сире, Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин ветеранĕсемпе тыл ĕçченĕсем! Çирĕп сывлăх, телей, ырлăх сунатпăр сире пурне те!

**«Единая Россия» партин Муркаш районĕнчи вырăнти уйрăмĕ.**

## Налук инспекцийĕнчен хыпарлаççĕ

# Ултав хакла ларать

Паллă ĕнтĕ, Раççей законодательствипе килĕшўллĕн ĕç паракансем уйрăм çынсен тупăшĕнчен налук тата обязательнăй пенси страхованийĕн страхование взносĕсене тўлесе тăма тивĕç. Анчах та хальлĕхе ĕç укçин пĕр пайне «конвертсемпе» паракансем те çук мар-ха. Ку вара ĕçлекенсен прависене тўрремĕнех хĕсĕрлени пулса тăрать. Мĕншĕн тесен çынсен пенси шайĕ мĕнле пуласси пенси страхованийĕн взносĕсене мĕн чухлĕ куçарнипе тўрремĕнех çыхăннă. «Конвертсенче» илнĕ ĕç укçи виçи отпуска кайнă чухне е чирлесен больничнăйне укçа илнĕ чухне те палăрмасть, пĕчĕкрех пулать.

Кашни гражданин хăйĕн прависене хўтĕлеме тивĕç. Çавăнпа та кун пек тĕслĕхсене пĕлетĕр пулсан уççăн та, анонимлă майпа та пире пĕлтерме пултаратăр. Федераллă налук служби районсем хушшинчи 6-мĕш номерлĕ инспекцийĕн шанăç телефонĕ – 8 (83547) 2-30-64. Çырăва çак адреспа яма пултаратăр: Етĕрне хули, Çĕнтерў 30 çул тултарнин урамĕ, 2 «а» çурт.

# Конкурса хутшăнăр

Шкулсенче 9 – 11-мĕш классенче вĕренекенсем валли апрель – май уйăхĕсенче «Налоги глазами школьников» конкурс иртет. Çĕнтерўçĕсене дипломсемпе укçан парнесем кĕтеççĕ. Конкурс положенийĕпе Федераллă налук служби Чăваш Республикинчи управленийĕн Интернет-сайтĕнче «Официальные мероприятия» пайра е вырăнти налук инспекцийĕнче паллашма пулать.

**Л. МИХАЙЛОВА,**
**налук инспекцийĕн пуçлăхĕн çумĕ, РФ патшалăх гражданла службăн 3-мĕш класлă советникĕ.**

## Суд материалĕсем тăрăх

# Сăмакун сутни те преступлениех

Эрех ĕçнипе тата алкоголизмпа кĕрешесси мĕн авалтанпах этемлĕх умĕнчи пысăк проблемăсенчен пĕри пулса тăнă. Ку халĕ те çаплах. Çавна май право сыхлавĕн органĕсем килти условисенче сăмакун тата ытти спиртлă эрех тавраşĕ туса хатĕрлесе сутакансене тупса палартассине хăйсен куç ытамĕнчен вĕçертмеççĕ. РФ Уголовнăй кодексĕпе килĕшўллĕн кун пеккисене 300000 тенкĕ таран штрафлама, 360 сехет таран обязательнăй ĕçсене явăçтарма, 2 çул таран ирĕклĕхе чакарма, 2 çул таран ирĕксĕрлесе ĕçлеттерме, çав таппăрах ирĕкрен хăтарма та пăхнă.

ЧР «Чăваш Республикинче административлă майпа правăна пăсни çинчен» Саккунĕн 16-мĕш статйипе килĕшўллĕн уйрăм çынсене килти условисенче сăмакун, спиртлă ытти шĕвек хатĕрленĕшĕн тата вĕсемпе сутă тунăшăн 5000 тенкĕ таран штрафлама пултараççĕ. Апла пулин те çавна пĕлсе тăнă çинчех кун пеккисем тĕл пулмаççĕ мар.

Акă шалти ĕçсен пайĕн сотрудникĕсем кăçалхи апрелĕн 4 тата 7-мĕшĕсенче «Алкоголь–Табак» операцийĕ профилактика мероприятийĕ ирттернĕ чухне Кĕрекаç хĕрарăмĕ хăйсен ялĕсене 60 тенкĕпе 250 грамм спиртлă шĕвек сутнине те тупса палăртнă. Паллă ĕнтĕ, унăн пĕчĕккех мар штраф тўлемелле пулать.

Кунсăр пуçне тата штраф суммине тўлеме васкаман çынсем те тĕл пулаççĕ. Хыркасси ялĕнче пурăнакан пĕр хĕрарăм тĕлĕшпе Муркаш районĕнчи 2-мĕш номерлĕ суд участокĕн миравай судйи 10000 тенкĕ штраф тўлесси пирки йышăну турĕ. Сăлтавĕ – унчен палăртнă 5000 тенкĕ штрафа вăл 30 кун иртсен те тўлесе татманни.

**Е. НИКИТИНА,**
**2-мĕш номерлĕ суд участокĕн миравай судйи.**

## Пенси ыйтăвĕсемпе

# Пенсие пысăклатас текенсем нумайрах

***Республикипе кăçал çултталăк пуçланнăранна 3,6 пин çын патшалăх пенсисене финанслассин программине хутшăнма заявлени çырса панă. Ку вăл иртнĕ çулхи çав вăхăтринчен икĕ хут нумайрах.***

Асăннă программăна Раççейĕпе 7,4 миллион çын хутшăнать. Чăваш Енпе ку хисеп 120 пин çынпа танлашать. Çулталăк пуçланнăранпа республикипе пулас пенси виçине пысăклатма хăйсен ирĕкĕпе 5 миллион тенкĕ ытла хывнă.

Программăна хутшăнас текенсем нумайланни çакăнпа та çыхăннă. Кăçалхи июлĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса хушăннă пенсисене тўлеме тытăнаççĕ.

Программăна хутшăнса хăйсен пулас пенси виçине ўстерме взноссем тўлесе тăракансене пенси тўлевне уйрăм счетра пăхнă пек тўлеме пултараççĕ. Вăл хăйсен ирĕкĕпе тўлесе тăнă взноссенчен, патшалăх финанславĕнчен тата вĕсене инвестицисенчен илнĕ тупăшран тăрать. Ăна çын ватлăха пула пенсие тухсан унăн ирĕкне кура 10 çул хушши е ытларах таппăр тўлесе тăраççĕ.

Патшалăх пенсисене финанслассин программине хутшăнма тесен 2013 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен Пенси фончĕн управленине пырса заявлени çырса памалла. Патшалăх пенсие финанслассин программине хутшăнакан çуллен 2 – 12 пин тенкĕ тўлесе тăрас пулать.

Тулли информаци Пенси фончĕн www.pfrf.ru сайтĕнче пур. Талăкĕпех ĕçлекен телефонпа та (8-800-505-55-55) шăнкăравлама пулать е Пенси фончĕн районти управленине пыма пултаратăр.

**О. АЛЕКСЕЕВА,**
**Пенси фончĕн районти управленийĕн пай пуçлăхĕ.**

## Объявления

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:070402:114, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6100 кв.м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

* * *

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:060402:257, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, с. Большой Сундырь, для ведения огородничества, площадью 277 кв.м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

* * *

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:060201:174, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, земельный участок расположен в южной части кадастрового квартала 21:17:060201, для ведения сельскохозяйственного производства, площадью 17618 кв.м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

* * *

**В объявлении собственника земельной доли Дашкова Петра Владиславовича о выделении земельного участка в счет земельной доли, опубликованном в райгазете «Çĕнтерў ялавĕ» от 04.12.2010 г. № 102 (7844) допущена опечатка. Вместо «центральной части» следует читать «северо-западной части» кадастрового квартала 21:17:121301.**

# Яшсен тивĕçĕ – çĕр-шыва хӳтĕлесси

Призыв

***Çурхи призыв вăхăтĕнче республикăри çар комиссариачĕн Муркаш тата Элĕк районĕсен пайĕнчен 125 яш Раççей çарĕн ретне тăмалла. Вĕсенчен ытларахăшĕ – Муркаш районĕнчен.***

***Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Александр Морозовпа (сулахайри) Дмитрий Иванов та (сылтăмри) иртнĕ эрне кун алла повестка илчĕç. Мăн Шашкарта пурăнакан Александр 18 професиллĕ училищĕрен вĕренсе тухнă ĕнтĕ, куçăмсăр майпа малалла вĕренме кĕнĕ. Анатри Панкли каччин Дмитрийăн пуянлăхĕ – Муркаш лицейĕнче илнĕ пĕлӳ. Ку таранччен илнĕ тарăн пĕлӳ çарта пулăшасса шанаççĕ вĕсем.***

***Районта йĕркеленĕ призывник кунĕнче çамрăксем валли асăнмалăх парнесем те, ăшă сăмахсем те нумай пулчĕç. Тĕслĕх илмелли çынсем уявра чылайăнччĕ. Вĕсен йышĕнче – Чечен Республикинчи хĕрӳ çапăçусене хутшăнса паттăрлăх кăтартнă Раççей Геройĕ Евгений Борисов тата республикăри çар комиссариачĕн Муркаш тата Элĕк районĕсен пайĕн ертӳçи Александр Кочуров та (сăн ӳкерчĕкре варринчисем). Паян-ыран салтак ятне илтме хатĕрленекен каччăсене интереслĕ сахал мар каласа пачĕç вĕсем. Аслă юлташĕсем вĕрентсе калани яшсен асне яланлăхах юлчĕ.***



Сцена çинче – кадетсен вальсĕ. Залра – пурнăçра çарти служба тарăн йĕр хăварнă арçынсем, салтак аттине тăхăнма хатĕрленекенсемпе вĕсен ашшĕ-амăшĕсем. Çапла мăнаçлă та савăнăçлă, çав хушăрах пулнипе малашлăха çыхăнтаракан лару-тăру хуçаланчĕ районти призывник кунĕнче.

Май уйăхĕнче, тĕрĕсрех каласан паян-ыранах, Муркаш тăрăхĕнчи хастар яшсене Раççей çарне ăсатма пуçлаççĕ. «Хальлĕхе вара яшсем çав тери анлă Тăван çĕршыва хӳтĕлессине хăйсем те чухласах каймаççĕ пулĕ-ха. Анчах та ку вăхăтлăх кăна», – район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Л. Тарасова яшсене саламланă май çапла пуçларĕ хăйĕн сăмахне. Тĕрĕсех пулĕ. Тепĕр чух хамăр пурнăçланă ĕçсене, хамăрăн пурнăçри тĕрлĕ тапхăрсене кайран ăнланса илетпĕр, вĕсен пĕлтерĕшĕ те тепĕр чух çулсем иртнĕçемĕн кăна куç умне тухса пырать...

Çар тата флот – акă Раççейĕн икĕ юлташĕ. Çак каларăша салтак пулса курнисем пурте пĕлеççĕ ĕнтĕ. Ку ĕмĕртен-ĕмĕре пыракан чăнлăх. Çакна вара Раççей историйĕ те аван кăтартса парать. Тăван çĕршывăн иртнĕ ĕмĕрти историне аса илсе, тĕрлĕ çапăçусенче пуç хунисене сума суса призывниксемпе пĕрле Афганистанри, Чечен Республикинчи хĕрӳ çапăçусене хутшăннисем Муркашри палăк умне хĕрлĕ хăюллă кăшăл хучĕç. Залра шăплăх минучĕ пулчĕ.

Чăнах та, çĕр-шыв анлăлăхне пирĕн районтан салтака каякансем тĕрлĕ чăçсене – Калининградран пуçласа Владивосток таранах – лекесси те çирĕплет. Повестка илнипе пĕрлех призывниксем хăйсем хăш çар чăçне, хăш вырăнта гражданла тивĕçе пурнăçлассине те пĕлчĕç. «Сирĕнтен хăшĕ те пулин яланлăхах хăйĕн пурнăçне çарпа çыхăнтарассине калама йывăр, паллах. Анчах та çак залра паян ветерансем ларнине аса илсен, хăвăр ӳснĕ Муркаш çĕрне аса илсен темĕнле йывăр саманта та çĕнтерме пулать. Яшсен тивĕçĕ – салтака каясси, хĕрсен – вĕсене кĕтесси», – терĕ республикăри çар комиссариачĕн Муркаш тата Элĕк районĕсен пайĕн пуçлăхĕ А. Кочуров.

Чечен Республикинчи хĕрӳ çапăçусене хутшăннă Евгений Борисов сăмахĕсем вăл пуçланă каласăва тăсрĕç. «Кашни арçын салтак аттине тăхăнасси – авалтан пырать. Сирĕн аслаçусем, асăрсем – чăн-чăн арçынсем – çакăнтан пăрăнман. Эсир те çак тивĕçе чыслăн пурнăçласса шанатпăр, эпир, çар çыннисем, сире хисеплесе çакăнта килнине шута илсен – пушшех те», – Раççей Геройĕн çирĕп сăмахĕ çапла пулчĕ.

Герой тенĕрен, кашни кун вĕсемпе тĕл пулмастпăр. Тен, теприн хăйĕн пурнăçĕнче Геройпа калаçма мар, юнашар тăрса сăн ӳкерĕнме те нихăçан та май пулмĕ. Муркаш каччисем вара хамăрăн паттăр ентешпе калаçма та, асăнмалăх сăн ӳкерĕнме те пултарчĕç: вĕсен халĕ салтак тивĕçне йĕркеллĕ пурнăçламасăр майĕ те çук. Район администрацийĕн вĕрентӳ тата çамрăксен политикин пайĕн ертӳçи З. Дипломатова яшсене саламласа призывниксем хушшинче малараx иртнĕ спартакиадăра палăрнисене грамотăсем парса чысларĕ. Вăл: «Пире сирĕн шăпа кăсăклантарсах тăрать. Эсир – пирĕн ачасем. Тивĕçе чыслăн пурнăçлăр», – тени залра ларакансене пурне те хумхатрĕ.

Етĕрне районĕнчен килнĕ «Память» ушкăнăн çар юррисене итлесе киленнĕ май пулас салтаксем аслă юлташĕсене те тимлесех итлерĕç: интернационалист салтаксен республикăри пĕрлешĕвне ертсе пыракан В. Лепешкин, районти пĕрлешĕвне ертсе пыракан В. Киршев, депутатсен районти пухăвĕн депутачĕ П. Бирюков – кашнин ырă та вĕрентсе каланă сăмахĕ уявра вырăнлă пулчĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Пулăшма ыйтатпăр

## Асатте пирки пĕлесчĕ



Пирĕн асатте Петр Тимофеевич Тимофеев 1943 çулта хыпарсăр çухалнă шутланать. Вăл ăçта вилнĕ, ăна ăçта пытарнă – ун пирки эпир нимĕн те пĕлместпĕр.

Асатте 1901 çулхи июлĕн 1-мĕшĕнче ун чухне Етĕрне уесне кĕнĕ Çĕнĕ Матьăк ялĕнче çуралнă. 4 класс вĕреннĕ. 1920–1922 çулсенче Иван пиччĕшĕпе Хĕрлĕ Çарта службӑра пулнă, Граждан вăрçине хутшăннă. Иван вăрçăра вилнĕ.

Асатте Петр Тимофеевич 1922 çулта вăрçăран таврăнсан 17 çулхи хĕрпе Марфа Арсентьевна Арсентьевăпа пĕрленнĕ. Вăл кӳршĕри Кĕртекасси ялĕнчен пулнă. Вĕсен çемьере 9 ача пулнă, иккĕшĕ кăна чĕрĕ юлнă.

Асаттене Элĕк Çар комиссариачĕ урлă 1941 çулхи сентябрĕн 11-мĕшĕнче стрелоксен 139-мĕш дивизийĕн 364-мĕш полкне фронта ăсатнă. 1942 çулхи августăн 21-мĕшĕнче аманнă, госпитале лекнĕ. Йывăр сурансене тӳсме тивнĕ. Çавна май ун çумне Терпелов хушамат «çыпăçнă». Юлашки çырура та вăл хăйĕн патне Терпелов хушаматпа çырма ыйтать.

Госпитальтен асатте 1942 çулхи декабрĕн 2-мĕшĕнче тухни паллă. Анчах та унченхи суранссене пула малти ретре стрелокра çапăçайман. Çавăнпа та ăна санитара вĕрентнĕ. Хул-çурăмĕпе тĕреклĕ пулнă вăл.

Унăн мăшăрĕ – пирĕн асанне – унран юлашки çыру 1943 çулхи августăн 9-мĕшĕнче илнĕ. Çав çулхи октябрĕн 3-мĕшĕнче вара асатте хыпарсăр çухални çинчен пĕлтерни килнĕ.

Пирĕн асатте пирки вăрçă участникĕсенчен кам та пулин пĕлет пулсан, вĕсене çырса пĕлтерме ыйтатпăр. Адресĕ: 429113, Чăваш Республики, Çĕмĕрле районĕ, Кабаново почта уйрăмĕ, Дубовка ялĕ, 22-мĕш çурт, Петров Маврикий Петрович.

Çĕнĕлĕхсем

## Улшăнусем вăя кĕчĕç

***Кăçалхи апрелĕн 4-мĕшĕнчен тытăнса 2012 çулхи апрелĕн 2-мĕшĕнче йышăннă 28-ФЗ № «О внесении изменений в Федеральный закон «О политических партиях» Федералла саккун вăя кĕнĕ.***

Чи малтанах кунта политика партийĕн тата унăн регионсенчи уйрăмĕсен членĕсен чи пĕчĕк шучĕ пирки асăнмалла. Енчен те унччен политика партийĕн членĕсем 40 пин çынран кая мар пулмалла пулнă пулсан, халĕ – 500 çынран кая мар.

Кунпа пĕрлех политика партийĕн уйрăмĕсем Раççей Федерацийĕн регионĕсенче çурринчен кая мар (унччен çурринчен ытларахăшĕнче) пулмалла. Политика партийĕн регионсенчи уйрăмĕсенчи членĕсен чи пĕчĕк шутне парти Уставĕпе палăртма пултараççĕ.

Политика партийĕн учредительнăй съездне делегатсем тăратассин схемине улăштарнă. Малашне политика партийĕн Раççей Федерацийĕн регионсенчен çурринчен ытларахăшĕсенчи уйрăмĕсенчен икшер делегат суйламалла. Унччен висĕ делегат суйланă.

Федераллă саккунра халĕ патшалăх регистрацийĕ витĕр тухма документсем тăратмалли тата вĕсене пăхса тухмалли вăхăтсене усăмлăн палăртнă. Федераллă саккунпа килĕшӳллĕн ку е вăл сăлтавпа политика партийĕн е унăн регионти уйрăмĕн регистрацине чарса лартнă пулсан, палăртнă çитменлĕхсене висĕ уйăх хушшинче пĕтерме тивĕç.

Политика партийĕсен ĕçне-хĕлне тĕрĕслесе тăрассин механизмĕ тĕлĕшпе уйрăм улшăнусем пур. Политика партийĕсемпе вĕсен регионсенчи уйрăмĕсем федераллă уполномоченнăй органа (Раççей Федерацийĕн Юстици министерстви) е унăн территорисенчи органне малтанхи пек кашни çул мар, 3 çулта пĕрре хăйсен ĕçне-хĕлне туса пынă пирки информаци тăратаççĕ, парти членĕсен шутне, ертсе пыракан орган ăçта вырнаçнине кăтартаççĕ.

Пĕтĕмĕшле (сводный) отчета та Тĕп суйлав комиссине партисен çуллен мар, 3 çулта пĕрре тăратмалла пулать.

Енчен те парти суйлава йĕркипе 7 çул хушши хутшăнмарĕ пулсан, Федераллă саккунăн 41-мĕш статйипе килĕшӳллĕн ăна пĕтерме тивĕç. Унччен ку тапхăр 5 çулпа танлашнă пулнă.

**Д. СЕРЖАНТОВ,**
**РФ Юстици министерствин Чăваш Республикинчи управленийĕн пуçлăхĕ.**

Ас тăвăм

## Ятран аса илер вĕсене

Пирĕн Кĕртекасси ялĕ пысăках мар. Илемлĕ вырăнта вырнаçнă вăл. Ялпа юнашар пĕр енче çырма, пĕвесем. Çуллахи шăрăх кунсенче кунта аслисемпе пĕрле ачасем те шыва кĕрсе киленеççĕ. Ялтан тухсан инçех мар кăнтăр енче вăрман кашласа ларать. 1960-мĕш çулсенче лартнă йывăççем пĕлĕте çитесшĕн кармашаççĕ.

1941 çул тĕлне ялта 34 уйрăм хуçалăх пулнă. Иртнĕ вăрçă хирне пирĕн ялтан 35 арçынпа яш-кĕрĕм тата хĕрупраç тухса кайнă. 20 çын Тăван çĕр-шыв ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн пуçĕсене хунă. Кусем вĕсем Иван Трофимов, Архип Трофимов, Александр Трофимов, Сергей Герасимов, Игнатий Васильев, Федот Никандров, Владимир Яковлев, Владимир Миронов, Иван Васильев, Григорий Офаринов, Митрофан Васильев, Петр Иванов, Иван Пахомов, Иван Никандров, Семен Никандров, Ерофей Петров, Петр Арсентьев, Василий Петров, Ананий Давыдов, Филипп Якимов. Вăрçăран тăван яла таврăннисен: Ольга Иванова, Василий Владимиров, Иван Петров, Аврам Еремеев, Павел Владимиров, Александр Владимиров, Ефим Шаронов, Меркурий Волков, Герман Арсентьев, Василий Николаев, Егор Арсентьев, Михаил Алексеев, Константин Васильев, Илларион Леонтьев, Виссарион Никандров та паян пирĕн хушăра çук ĕнтĕ.

Аслă Çĕнтерӳ уявĕ умĕн хамăр фронтовик ентешсен ячĕсене тепĕр хут аса илер, яланах асра тытар. Тивĕçлĕ вĕсем çакна.

**П. ИВАНОВ.**
Кĕртекасси ялĕ.

Ыйту – хурав

## Патшалăх экспертизи витĕр тухнă

**– Районта капиталлă юсав ĕçĕсем туса ирттермелли объектсен шăпи интереслентерет. Мĕнле объектсем пирки сăмах пырать тата ĕçсен калăпăшĕ пирки мĕн калама пулать?**

**В. ВАСИЛЬЕВ.**

Муркаш.

***Редакцие килнĕ ыйту çине район администрацийĕн капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çуртйĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн пуçлăхне Владимир НИКИТИНА хуравлама ыйтрăмăр. Акă мĕн пĕлтерчĕ вăл:***

– Районта капиталлă юсав ĕçĕсем туса ирттерме палăртнă хăш-пĕр объектсем нумаях пулмасть патшалăх регистрацийĕ витĕр тухрĕç ĕнтĕ. Сăмах кунта чи малтанах Муркашри Культура çурчĕ пирки пырать. Ăна реконструкци туса кану центрĕ усма пăхнă. 2011 çулхи пĕрремĕш кварталти смета хакĕпе шутласан асăннă объектра 40950,6 пин тенкĕлĕх юсав ĕçĕсем пурнăçламалла пулать.

Тепĕр объект – Муркашри лицей çурчĕ. Кунта шкул çулне çитмен ачасен вĕрентӳ учрежденине йĕркелемелле. 2011 çулхи тăваттăмĕш кварталти хаксемпе пăхсан 21052,67 пин тенкĕлĕх тĕрлĕ ĕçсем пурнăçламалла.

Мăн Сĕнтĕрте вара кану центрне усма палăртнă. Иртнĕ çулхи виççĕмĕш кварталти унăн смета хакĕ – 21416,89 пин тенкĕ.

Укçа-тенкĕ куçарса панă май хăш-пĕр объектсенче капиталлă юсав ĕçĕсене кăçалах тытăнма май пур.

# Парта хушшинчен – вӑрҫӑ хирне



Ҫӗнтерӗве ҫывхартма хутшӑннӑ кашни салтак пысӑк хисепе тивӗҫ. Вӗсем пирӗн паянхи хӑтлӑ пурнӑҫшӑн кун-ҫулӗсене шеллемен, мӗн кӑна чӑтса ирттермен пулӗ. Эпӗ Аслӑ Ҫӗнтерӳ умӗн Мӑн Сӗнтӗр салинче пурӑнакан Геннадий Борисович Вазиков вӑрҫӑ ветеранӗпе тӗл пулса калаҫрӑм, ӑна синкер вӑрҫӑ ҫулӗсем пирки каласа пама ыйтрӑм. Паллӑ ӗнтӗ вӑл вӑхӑтсене аса илме никама та ҫӑмӑл мар. Ҫавӑнпах та пулӗ кӑвак ҫӳҫлӗ ветеранӑн куҫӗсем ирӗксӗрех шывланчӗҫ.

...Вӑрҫӑ пуҫланни пӗтӗм ӗҫ-хӗле тӗпрен улӑштарнӑ, вӑй питти арҫынсем ҫӗр-шыва хӳтӗлеме тухса кайнӑ. Ялсенче вара ватӑ-вӗтӗ кӑна юлнӑ. Ӗҫлеме хал ҫитерекенсем май пур таран фронта пулӑшнӑ.

– 1943 ҫулта эпӗ вун ҫичӗ ҫултискер шкулта вӗренеттӗмччӗ. Пирӗн класри арҫын ачасене вӑрҫа каймаллине класа кӗрсе каларӗҫ, ку пирӗншӗн пысӑк кӗтменлӗх пулчӗ. Паллах, эпир пурте тӑван ҫӗр-шыва хӳтӗлеме хатӗр пулнӑ ӗнтӗ. Ҫапла вара пӗтӗм шухӑш-кӑмӑлпа фронта пуҫтарӑнтӑмӑр. Класра хӗр ачасем кӑна тӑрса юлчӗҫ. Тӑван килтен аттепе анне "Лайӑх кайса кил, хӑвна упра, ывӑлӑм" тесе ӑсатрӗҫ. Хам та хурланатӑп, вӗсем те йӗреҫҫӗ. Эпир вара хурлӑхлӑ юрӑпа тӑван ялтан алӑ сулса тухса кайрӑмӑр, – куҫӗсене шывлантарса аса илчӗ хисеплӗ ветеран.

Ҫар ӗҫне чӑваш каччи Чкаловски училищинче хӑнӑхать. Пӗр хӗл алла автомат тытма, парашютпа сикме вӗреннӗ. Ҫар ӗҫне пӗтӗмӗшле хӑнӑхнӑ яшсене полковник пилӗпе Мускав хулине ӑсатаҫҫӗ. Унтан вара вӗсене анлӑ ҫул вӑрҫӑ хирне илсе каять. Хастар десантник паттӑрлӑхпа палӑрать, уйрӑм ӗҫсене тӑтӑшах хутшӑнать.

– Пӗррехинче апатланма ларнӑччӗ кӑна, пирӗнтен инҫех мар граната ҫурӑлчӗ. Унӑн ванчӑкӗ мантан инҫех мар ларакан юлташа та, мана та йывӑр суранлатрӗ. Борис Захаров юлташа тата тӑшманӑн виҫӗ пульли амантрӗ, эпӗ ӑна пулӑшас тесе питӗ тӑрӑшрӑм, анчах вӑл манӑн аллӑрах куҫне ӗмӗрлӗхех хупрӗ. Ҫапла вара мӗн чухлӗ салтак ҫутӑ тӗнчерен вӑхӑтсӑр уйрӑлчӗ пулӗ, манас марччӗ вӗсене нихӑҫан та. Аслӑ Ҫӗнтерӗве вара эпӗ Полтава шывӗ хӗррине кӗтсе илтӗм, савӑнипе ҫӗлӗксене ҫӳлелле ывӑтатпӑр,– аса илчӗ Геннадий Борисович вӑрҫӑ хирӗнчи вӑхӑтсене.

Хисеплӗ ветеран аса илӗвӗ ҫумне унӑн мӑшӑрӗ хутшӑнчӗ. Вӑрҫӑ пуҫланнӑ чухне вӑл вун пӗр ҫулта кӑна пулнӑ-ха. Аслисемпе тан тырӑ вырнӑ, ытти йывӑр ӗҫе пурнӑҫланӑ, мӗн пур нушана чӑтса ирттернӗ.

– Июнӗн 22-мӗш числине паянхи кун пекех астӑватӑп. Каҫхине ӗнесене улӑхран куракӑ ҫитерсе килтӗмӗр те усал хыпар пӗлтӗмӗр. Урамра пурте пӑлханулӑн калаҫаҫҫӗ. Ҫапах та паянхи кун ҫав вӑхӑтра нушаланнӑ ҫынсене тимлӗх сахалтарах уйӑрнӑн туйӑнать, – терӗ Роза Илларионовна вӑл вӑхӑтсене паянхипе сӑнласа.

Вӑхӑт мирлӗ пурнӑҫа куҫсан Геннадий Борисович ответлӑ ӗҫсене кӳленет. Районти физкультурӑпа спорт пайӗн ӗҫне ертсе пырать. Каярах, мӗн тивӗҫлӗ канӑва тухиччене, ҫирӗм пилӗк ҫул хушши товароведра тӑрӑшать. Паянхи кунта вӑл вӑрҫӑ наградисене чи пысӑк тупра вырӑнне хурса шурӑ пусмапа чӗркесе упрать. Вӑрҫӑ нушине чӑтса ирттернӗ Вазиковсем пӗр ҫемьене пӗрлешни кӗҫех утмӑл ҫул пулать. Улми йывӑҫҫинчен аякка ӳкмест тенӗ евӗр ашшӗ-амӑшӗнчен ыррине кӑна илсе ӳснӗ ачи-пӑчи те пурнӑҫ ҫулӗ ҫине ҫирӗп тӑма ӗлкӗрнӗ ӗнтӗ. Халӗ ашшӗ-амӑшӗ вӗсен хӳттинче.

Ҫапах та ҫӗнтерӗве ҫывхартма хастар хутшӑннӑ хисеплӗ ветерана паянхи кун пӑшӑрхантаркан пысӑк ыйту пур.

– Пурнӑҫ условийӗсене кура саккунпа килӗшӳллӗн ветерансен хӑшпӗр категорийӗсене ҫурт-йӗрпе тивӗҫтереҫҫӗ, теприсене вара ҫук. Ман шутпа вӑрҫӑ хирӗнче пулнӑ, нуша витӗр тухнӑ ҫынсене ҫапла майпа уйӑрни тӗрӗсех те мар пек туйӑнать, – хӑйӗн пӑшӑрханӑвне пытармарӗ ветеран.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

# Асрах-ха ҫав ҫулсем

Эпӗ халӗ Мускав хулинче пурӑнатӑп. Ҫамрӑклӑх ҫулӗсем вара Муркаш районӗнче иртрӗҫ. Вӗсем вӑрҫӑ ҫулӗсемпе пӗр килчӗҫ. Ун чухнехи йывӑр вӑхӑт халӗ те асрах.

Вӑрҫӑ пуҫланнӑ чухне эпӗ ун чухнехи Сӗнтӗр районӗнчи Янӑм шкулӗнче 7 класс вӗренсе пӗтертӗм. Хыҫҫӑн мана Сӗнтӗр райӗҫтӑвкомӗ урлӑ Шупашкара бухгалтерсен курсне вӗренме ячӗҫ. Кайран вара социаллӑ хӳтлӗх пайӗнче ӗҫлерӗм. Хам ӗҫпе районти чылай ялсене, тӗрлӗ ҫемьесенче пулма тивнӗ. Мана шанса панӑ участокра 9 ял Совечӗ пулнӑ вӗт-ха. Иртнӗ вӑрҫӑ кашни ҫемьенех епле йывӑр хуйхӑ кӳнине хам куҫпа курнӑ.

67 ҫул ҫитет Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑра Ҫӗнтерӳ тунӑранпа. Ҫавна май хам пӗлнӗ тата хама пӗлнӗ ветерансене, тыл ӗҫченӗсене, «вӑрҫӑ ачисене» ҫак Аслӑ Ҫӗнтерӳ кунӗ ячӗпе саламласа ырлӑх-сывлӑх сунатӑп. Никамӑн та урӑх нихҫан кун пек нуша пурнӑҫа курмалла ан пултӑр. Вӑрҫӑран хӑрушши ҫӗр ҫинче нимӗн те ҫук. Ан пултӑр вӑрҫӑ нихҫан.

**К. ТРОИЦКАЯ.**

Мускав хули.

## Объявление

Совет директоров открытого акционерного общества «Моргаушский автомобильно-технический сервис», расположенный в с.Моргауши, ул.50 лет Октября, д.23, сообщает о проведении общего собрания акционеров **7 июня 2012 года.**

Начало собрания - **в 14.00 часов**. Начало регистрации – **в 13.00 часов**.

Место нахождения: ЧР, с.Моргауши, ул.50 лет Октября, д.23.

Место проведения: Зал заседания административного здания ОАО «Моргаушскавтотехсервис».

Дата составления списка акционеров, имеющих право на участие в общем собрании акционеров: **02 мая 2012 года.**

**Повестка дня:**

1) Определение порядка ведения годового общего собрания акционеров

2) Избрание членов счетной комиссии.

3) Утверждение годового отчета, годовой бухгалтерской отчетности, в том числе отчетов о прибылях и убытках (счетов прибылей и убытков) общества, а также распределение прибыли.

4) О дивидендах и убытков общества по результатам финансового года.

5) Избрание Совета директоров общества.

6) Избрание ревизионной комиссии общества.

7) Утверждение аудитора общества.

8) Ознакомление решениями заседаний Совета директоров.

Каждый акционер, прибывающий на общее годовое собрание акционеров общества, должен иметь при себе паспорт.

С информацией (материалами), подлежащей предоставлению акционерам при подготовке к проведению общего годового собрания акционеров, можно ознакомиться в течение 20 дней до даты проведения собрания ежедневно, кроме выходных дней, с 8.00 до 12.00 часов по адресу: с.Моргауши, ул.50 лет Октября, д.23, бухгалтерия.

**Совет директоров**
**ОАО «Моргаушскавтотехсервис».**

## Объявления

**ОБЪЯВЛЕНИЕ О ПРОДЛЕНИИ СРОКА ПРИЕМА ЗАЯВОК!**

Управляющая компания МУП «Рынок «Моргаушский», находящаяся по адресу: с. Моргауши, ул.Чапаева, д.44а, объявляет о продлении срока приема заявок на проведение конкурсного отбора начинающих субъектов малого предпринимательства для размещения в Производственном бизнес-инкубаторе с.Моргауши Моргаушского района.

Для участия в конкурсном отборе допускаются юридические лица, индивидуальные предприниматели своевременно представившие конкурсную заявку, надлежащим образом оформленные документы, а также выполнившие все требования, предусмотренные условиями конкурса.

Для участия в конкурсе претенденты подают конкурсную заявку, запечатанную в конверт, представляющую собой комплект следующих документов:

заявку на участие в конкурсе;

копии учредительных документов и документа о государственной регистрации - для юридических лиц;

свидетельство о государственной регистрации предпринимателя, осуществляющего свою деятельность без образования юридического лица - для индивидуальных предпринимателей;

утвержденный претендентом бизнес-план, направленный на производственную деятельность;

копии бухгалтерской отчетности за предыдущий год и истекший квартал текущего года, заверенные территориальным органом Федеральной налоговой службы по месту государственной регистрации претендента;

подтверждение территориального органа Федеральной налоговой службы по месту государственной регистрации претендента об отсутствии просроченной задолженности по платежам в бюджет и внебюджетные фонды, в том числе по штрафам и финансовым санкциям;

подтверждение финансового отдела администрации Моргаушского района Чувашской Республики об отсутствии просроченной задолженности по ранее предоставленным из республиканского бюджета Чувашской Республики и местных бюджетов средствам, выданным на возвратной основе.

Указанные документы скрепляются подписью и печатью претендента либо личной подписью индивидуального предпринимателя с обязательным указанием реквизитов свидетельства о государственной регистрации и идентификационного номера налогоплательщика. Форму заявки можно получить у Управляющей компании - МУП «Рынок «Моргаушский» нарочно и в электронном виде. Прием документов на участие в конкурсе осуществляется с 05 мая 2012 года.

Весь пакет документов представляется не позднее 05 июня 2012 г. в Управляющую компанию МУП «Рынок «Моргаушский» по адресу: с. Моргауши, ул.Чапаева, д.44а, тел. 63-3-45.

Стоимость аренды офисных помещений составляет - 50руб. за кв.м, производственных помещений -190руб.за кв.м.

Конкурс состоится 07июня 2012 года в 10.00 часов в зале заседаний Производственного бизнес-инкубатора с.Моргауши Моргаушского района по адресу: с.Моргауши, ул. 50 лет Октября, д.25.

* * *

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения»:**

**- с кадастровым номером 21:17:200701:470, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Тораевское сельское поселение, земельный участок расположен в юго-восточной части кадастрового квартала 21:17:200701, для ведения сельскохозяйственного производства, площадью 53394 кв.м.;**

**- с кадастровым номером 21:17:200701:471, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Тораевское сельское поселение, земельный участок расположен в южной части кадастрового квартала 21:17:200701, для ведения сельскохозяйственного производства, площадью 246133 кв.м.;**

**- с кадастровым номером 21:17:200601:75, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Тораевское сельское поселение, земельный участок расположен в западной части кадастрового квартала 21:17:200601, для ведения сельскохозяйственного производства, площадью 44469 кв.м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

**Проводится конкурсный отбор для включения в кадровый резерв администрации Хорнойского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики**

Администрация Хорнойского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о приеме документов кандидатов, желающих участвовать в конкурсном отборе для включения в кадровый резерв администрации Хорнойского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики с 5 мая 2012 года.

Кадровый резерв формируется с учётом реестра должностей муниципальной службы, поступивших заявлений муниципальных служащих (граждан) и представляет собой список муниципальных служащих и лиц, не состоящих на муниципальной службе, отвечающих квалификационным требованиям, предъявляемым к соответствующим должностям, обладающих потенциальными способностями, необходимой профессиональной компетентностью для замещения вакантных или вновь образуемых должностей муниципальной службы, замещаемых без ограничения срока полномочий.

Для участия в отборе кандидаты для включения в кадровый резерв представляют следующие документы:

а) личное заявление;

б) собственноручно заполненную и подписанную анкету по установленной форме с приложением фотографии;

в) копию паспорта или заменяющего его документа (соответствующий документ предъявляется лично по прибытии на конкурс);

г) копии документов, подтверждающих необходимое профессиональное образование, стаж работы и квалификацию:

копию трудовой книжки или иные документы, подтверждающие трудовую (служебную) деятельность гражданина;

копии документов о дополнительном профессиональном образовании, о присвоении ученой степени, ученого звания, заверенные нотариально или кадровыми службами по месту работы (службы);

д) заключение медицинского учреждения об отсутствии заболевания, препятствующего поступлению на муниципальную службу;

е) отзыв непосредственного руководителя муниципального служащего с рекомендацией о включении муниципального служащего в кадровый резерв (характеристика - от гражданина, не состоящего на муниципальной службе);

ж) копию решения аттестационной комиссии (при наличии) о том, что муниципальный служащий подлежит включению в установленном порядке в кадровый резерв для замещения вакантной должности муниципальной службы в порядке должностного роста;

з) другие документы, предусмотренные законодательством, а также материалы, которые, по мнению муниципального служащего (гражданина), подтверждают его профессиональные заслуги (справки, публикации, дипломы, рекомендации, книги, брошюры, рефераты и другие).

Прием документов для участия в конкурсе осуществляется в течение 30 календарных дней со дня опубликования данного объявления ( с 5 мая по 4 июня 2012 г. включительно) по рабочим дням с 8 до 17 часов по адресу: д. Хорной, ул. Новая, д. 14.

За дополнительной информацией обращаться по телефону 62-1-44, факс 62-1-44, эл.почта mrgxorn_pos@cbx.ru, официальный сайт администрации Хорнойского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики.

**Информация**
**Открытое акционерное общество**
**«МОРГАУШСКИЙ АВТОМОБИЛЬНО-ТЕХНИЧЕСКИЙ СЕРВИС»**

Адрес:429530,Россия, Чувашская Республика, с. Моргауши, ул.50 лет Октября, д. 23.тел.62-7-90, факс(83541) 62-7-90.

Стоимость чистых активов на 31.12.2011 г. - 5832 тыс. руб.

Размер уставного капитала на 31.12.2011 г. - 2995 тыс. руб.

Количество акционеров на 30.04.2012 г. - 187 чел.

Специализированный регистратор: филиал «ОРК - Чебоксары» - ОАО «Объединенная регистрационная компания», лицензия ФКЦБ России №10-000-1-00314 от 30.03.2004 г.

Адрес: 428018, Россия, Чувашская республика, г. Чебоксары, ул.К.Иванова, д. 79/16, офис 69 .тел. 58-39-38.

**БУХГАЛТЕРСКИЙ БАЛАНС (тыс. руб.) за 2011 г.**

| АКТИВ | На 31.12.2010 г. | На 31.12.2011г. |
|---|---|---|
| **1. Внеоборотные активы** | | |
| Основные средства | 3496 | 3452 |
| **2. Оборотные активы** | | |
| Запасы | 3373 | 3041 |
| Дебиторская задолженность | 1111 | 2011 |
| Денежные средства | 635 | 140 |
| **БАЛАНС** | **8615** | **8644** |
| **ПАССИВ** | | |
| **3. Капитал и резервы** | | |
| Уставный капитал | 2995 | 2995 |
| Добавочный капитал | 7362 | 7362 |
| Резервный капитал | 51 | 51 |
| Нераспределённая прибыль(непокрытый убыток) | -2871 | -4576 |
| **4. Краткосрочные обязательства** | | |
| Кредиторская задолженность | 1078 | 2812 |
| **БАЛАНС** | **8615** | **8644** |

**ОТЧЕТ О ПРИБЫЛЯХ И УБЫТКАХ (тыс. руб.)**

| Показатель | за 2011 год |
|---|---|
| Выручка (нетто) от продаж | 5433 |
| Себестоимость продаж | 6839 |
| Прибыль от продаж | -1406 |
| Прочие доходы | 219 |
| Прочие расходы | -341 |
| Прибыль (убыток) до налогообложения | -1528 |
| Иные обязательные платежи из прибыли | -177 |
| Чистая прибыль (убыток) | -1705 |

**Генеральный директор Л.Д. ДМИТРИЕВ.**
**Главный бухгалтер Л.П. ИВАНОВА.**

Достоверность бухгалтерского баланса и отчета о прибылях и убытках подтверждена аудиторской фирмой ООО «Н.И.К.А.Р-Ч» (член Некоммерческого партнерства «Российская Коллегия аудиторов», включенного в Государственный реестр саморегулируемых организаций аудиторов на основании приказа Минфина России от 22.12.2009 года № 675).

# Çĕр республикăмăра та кирлĕ

Пирĕн интервью

***Ватă çынсем патне шанчăка кĕрсе вĕсен ял хуçалăх çĕрĕсен пайĕсене саккун нормисене пăсса пĕчĕк хакпа туяннă хыççăн хаклăрахпа сутă туса пуяс текенсем тĕлĕшпе Чăваш Республикинче пĕрремĕш судсем иртнĕ.***

***Çĕрпе суту-илӳ тăвас çĕрти суеçтерӳсем нумай çул пыраççĕ пулин те, халĕ тин «пăр тапранни» мĕнпе çыхăннă-ха? Çак ыйту çине хурав шыраса «Советская Чувашия» хаçат корреспонденчĕ Чăваш Республикин пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен министрĕпе С. ЕНИЛИНĂПА тĕл пулнă.***

– Эсир хускатнă ыйту обществăра тымарланнă темелле. 2010 çулта пирĕн министерство çак ыйтура патшалăхăн тата ял ĕçченĕсен интересĕсене активлă хӳтĕлеме пуçларĕ. Çавăн чух тин çак ултав ĕçĕ якалса çитни куç умне тухрĕ. Аферистсем саккун нормисене пур енпе те иртме тăрăшнă иккен. Çавăнпа та паян вĕсем тĕлĕшпе пуçарнă суд ĕçĕсем йывăррăн пыраççĕ. Явап тытма саккун умне тăратнисем суд процессĕсене тăсассипе çĕр тĕрлĕ мел шыраççĕ. Вĕсен «хӳхлевĕсем» паян нумай инстанцисенче выртаççĕ.

Йĕркене пăсакансемпе кĕрешесси саккуна çĕнетӳсем кĕртнипе мар Чăваш Республикин Президенчĕ (халĕ Пуçлăхĕ) пулма Михаил Игнатьева çирĕплетнĕрен пуçланчĕ. Унăн принципла тĕллевĕ – граждансемпе патшалăхăн интересĕсене хӳтĕлесси. Çак позици нумайăшне килĕшмест пулĕ, анчах эпир хамăр пуçăннă ĕçе анлăлатса çеç пырăпăр. Акă, иртнĕ кунсенче кăна эпир республика прависене пăсса уйрăм çын харпăрлăхне куçарнă 100 гектар ытла çĕр пирки суда тавăç тăратрăмăр. «Çĕнĕ бизнесменсем» харпăрлăха илнĕ çĕрпе тĕллевлĕн ял хуçалăх продукцийĕ туса илме усă курнă пулсан юратчĕ. Анчах вĕсем çакăн вырăнне çĕре пĕчĕк пайсем çине пайласа вĕсене ваккăн тата пысăк хаксемпе сутассипе ĕçлеççĕ. Ку вара йĕркене пăсни пулать. Ун çине эпир куç хупаймастпăр.

**– Ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсемпе «ĕçленĕ» чух мĕнле йĕркене пăсни ытларах куç умне пулать?**

– Кунта «Ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсен пусă çаврăнăшĕ çинчен» ятарлă саккун пуррине палăртса хăварам. Унта çĕр участокĕсемпе мĕнле усă курмаллине питĕ ăнланмалла каланă. Кирлĕ пулсан Чăваш Республикин вĕсене туянма мал пĕлтерĕшлĕ право та пур. Çапла вара çĕр хуçин хăйĕн çĕр лаптăкне сутас тесен чи малтан ăна Республика Правительствине сĕнмелле. Правительство официаллă йĕркепе вăл е ку участок республикăна кирлĕ мар тесен кăна ăна çĕр хуçи виççĕмĕш участнике сутма пултарать. Анчах хакĕ республикăна сĕннинчен кая пулмалла мар.

**– Эпĕ пĕлнĕ тăрăх çĕр ыйтăвĕсемпе сиксе тухакан аферăсем ытларах ватă çынсемпе çыхăннă. Вĕсем хăйсем тĕллĕн йышăну тăвайманнипе усă кураççĕ те пулас «çаврăнăçуллисем»?**

– Ку тĕрĕс. Посредниксем тата ял хуçалăх çĕрĕсене вăрттăн туянакансем хăйсен ултавлă ĕçĕсене пурнăçа кĕртме саккунсене лайăх пĕлмен ватă çынсене – çĕр хуçисене – суйласа илеççĕ. Посредниксем саккунри юридицилле ыйтусене тĕшмĕртмен ватăсенчен çĕрĕсемпе усă курма доверенность илеççĕ. Çав хутсем çине ватă çынсем хăйсен çĕр участокĕсемпе тĕрлĕ операцисем тума ирĕк парса алă пуснине те ăнланмаççĕ. Пĕрремĕшсем вара çĕр хуçисене чăн хакран вунă е çĕр хут сахалрах укçа тӳлеççĕ. Çак ултав çулне ура хурасси – пирĕн тĕллев.

**– Светлана Александровна, Сирĕн министерство хăйĕн ĕçĕнче çĕр участокĕсем тĕлĕшпе тата мĕнле ултавсен тунине тĕл пулать?**

– Çĕр участокĕсене çĕр пайĕсем шучĕпе виçсе илнĕ çĕрте нумай ултавсем çиеле тухаççĕ. Тĕслĕххен, вăл е ку ватăн шаннă çынни çĕр участокĕсене ял çывăхнерех е ялăн аталану перспективи пур вырăнсене илме тăрăшать. Кунта вырăнсенчи ял тăрăхĕсен специалисчĕсем те саккуна пăсас çул çине тăма пултараççĕ. Кун пек чух вĕсем ватăсен патне киле пырсах пай çĕрĕсене сутма е уйрăм çын çине доверенность çырса пама ыйтаççĕ. Ку вăл пурнăçа киле çĕре сутасси патне илсе пыракан çул-йĕр.

**– Çĕрсем тĕлĕшпе унччехи çулсенче пурнăçа кĕртнĕ «ĕçсене» Сирĕн министерство тĕрĕслет-и?**

– 2010 çулччен республика ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсене туянассипе ĕçлемен. Анчах пурнăç улшăнать. Паян Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Правительство умне унччехи çулсенче çĕр тĕлĕшпе саккунсене пăснă тĕслĕхсене пĕтерес тĕллев лартать. Кунпа пĕрлех çав йăнăшсене малашне те тăвас марри тăтăшах кун йĕркинче тăрать. Хальхи вăхăтра Чăваш Республикинче нумай ачаллă çемьесене çĕр парассипе Саккун ĕçлеме пуçларĕ. Ун ĕçĕнче çĕр участокĕсем пуриншĕн те меллĕ пуласси тĕп вырăнта. Апла пулсан Чăваш Республикине те çĕр кирлĕ.

**З. ШИТЛАЕВА.**

Ĕç сыхлавĕ

## Ĕçлекен хӳтлĕхре пултăр

Етĕрнери районсем хушшинчи следстви пайĕ çулталăкăн пĕрремĕш çурринче ĕç сыхлавĕн правилисене пăснипе пуçарнă икĕ уголовлă ĕçе вĕçленĕ. Муркаш районĕнчи пĕр организацинче ĕçлекен ĕç вăхăтĕнче çурт тăррине хăш-пĕр ĕçе пурнăçланă вăхăтра ӳкнĕ, йывăр суранланса сывлăхне палăрмаллах хавшатнă. Ĕç паракан кунта ĕçе кирлĕ пек йĕркелемени палăрнă. Суд айăпланакана çирĕм пин тенкĕ штраф тӳлеттерме йышăннă.

**Пичете Етĕрнери районсем хушшинчи следстви пайĕн материалĕ тăрăх хатĕрленĕ.**

Прокуратурăра

## Пĕвери пулăсем вилнĕ

Катăкуйĕнчи уйрăм çын пĕвинче пулă йышлă вилнине асăрханă. Çавна май инкек вырăнне район прокуратурин, ветеринари службин ĕçченĕсем тата асăннă пĕвепе усă каракан çын пĕрлехи тĕрĕслеве тухнă. Хальлĕхе паллă мар сăлтава пула пилĕк çĕр килограмм пулă вилнĕ. Инкек сăлтавне палăртма пĕвери пулăсене, шыва ятарлă экспертизăна янă. Пĕвене тасамарлăхран тасатнă ĕнтĕ. Экспертиза пĕтĕмлетĕвĕпе каярах паллаштарăпăр.

**А. ЧЕРНОВ, район прокурорĕн пулăшуçи.**

Вулакан пултарулăхĕ

## Нушаллă тантăшсем

*(«Вăрçă ачисене» халаллатăп)*

Ман тантăшсем, тăвансем
Хаяр вăрçă куртăмăр,
Нушине пит тӳсрĕмĕр,
«Вăрçă ачи» пултăмăр.
Çиме çăкăр çукрахчĕ,
Тумланмалли пулмарĕ,
Вутти-шанки хĕсĕкрех,
Атте-анне килте мар.
Анне чаврĕ окопне,
Атте – вăрçă хирĕнче.
Эпир вырнă тыррине
Иртен пуçласа каçчен.
Каçсерен авăн çапса
Сăвăраттăмăр тырра,
Çуркунне кунтăкпала
Тыр акаттăмăр уйра.
Çукчĕ вăхăт вĕренме,
Кун кунлаттăмăр хиртех,
Тăраниччен çиеймен,
Фронтшăн тăрăшнă пурте.
Çăпатисем – пушăтран,
Тăли те хăть çĕтĕкки.
Шăтнă çĕлĕкĕ пуçра,
Çире – кив сăхман пекки.
Улăм хутса пурăнса
Вутă-шанкă çук чухне.
Кăмакара çывăрса
Ытла сивĕ каçсене.
Чăтса, тӳссе нушине
Çĕнтертĕмĕр тăшмана.
Кун пек хăрлăх кунсене
Тек курас мар нихăçан.

**Е. ВАСИЛЬЕВ.**
Якаткасси ялĕ.

# Çула тухсан тимлĕ пулăр

ГИБДД асăрхаттарать

Çул çинчи инкек – яланах питĕ хăрушă. Ăçтарах, мĕнле, кампа пулма пултарасси те пĕлтерĕшлĕ мар: вăл пирĕнпе пуринпе те пулма пултарать. Тĕрлĕ сăлтавсене пула: водителĕн е çуран çӳрекенĕн тимсĕрлĕхĕ, водитель ӳсĕр пулни, çулсем япăх пахалăхлă тата ытти те.

Акă кăçалхи пĕрремĕш кварталта район территорийĕнчи çулсем çинче 7 инкек пулнине регистрацилерĕмĕр. Вĕсенче тăватă çын вилнĕ, улттăн суранланнă. Пĕлтĕрхи çак тапхăртипе танлаштарас пулсан инкексен шучĕ чакрĕ, анчах та вĕсенче çын вилесси вара, шел пулин те, ӳсрĕ.

Водительсем çул-йĕр хăрушсăрлăх правилисене пăснăран пулса тухнă инкексем сахалланнăшăн кăмăллă эпир. Анчах та кăçал пулса иртнĕ пĕр тĕслĕх – снегоходпа ярăннă чух водитель çăмăлттайлăхне пула ача суранланни (кун пирки район хаçатĕнче çырнăччĕ) – пурне те шухăшлаттармалла. Кашни транспорт хатĕрĕ пысăк тимлĕх ыйтать.

Çула машинăри хăрушсăрлăх пиçиххийĕсене çыхмасăр тухакансем те тĕрлĕ инкек-синкек пирки пачах та шутламаççĕ тейĕн. Çакăн пек 60 ытла водителе административлă майпа явап тыттарнă. Руль умне ӳсĕрле ларнă 19 водитель те хăйсене «кĕпепе çуралнисен» йышне кĕртеççĕ-ши? Асăрханулăх, йĕркелĕх пирки, юнашар çынсем пирки шутлама вĕренсе çитеймеççĕ-ха.

Аварилле лару-тăру кăларма пултаракан çын факторĕ çумне тата çул факторĕ те хушăнма пултарать. Акă пулса иртнĕ инкексенчен виççĕшĕнче унăн витĕмĕ пуррине тĕпчесе палăртнă. Çав çулсене пăхса тăракансене административлă майпа айăпланă. Айăпа кĕнĕ организацисем вара çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтерни ответлăха туясси пĕтменнине çирĕплетрĕ.

Çуран çӳрекенсем пирки калас пулсан ӳкерчĕк çапларах пулчĕ: çуран çӳрекен 15 çынна йĕркене пăхăнманшăн, çул урлă каçакансене çул паман 15 водителе явап тыттарнă. Пурĕ вара патшалăх çул-йĕр инспекцийĕн районти уйрăмĕ йĕркене пăснă 788 çынна административлă майпа явап тыттарнă, вĕсене панă штрафсен калăпăшĕ 204300 тенкĕпе танлашать.

Пирĕн район территорийĕнчи Автанкасси – Муркаш – Козьмодемьянск çулăн 22 тата 30 çухрăмĕсем уйăрмах тимлĕ пулма ыйтаççĕ. Çавăн пекех Атăл – «Гигант» – Мăн Сĕнтĕр – Шашкарвăрри çулăн 5 çухрăмĕ те инкек час-часах пулакан вырăнсенчен пĕри шутланать. Федераллă трасса хăрушлăхĕ пирки кашниех пĕлсе çитнĕ ĕнтĕ. Анчах та асăрханулла, тимлĕ пулмалли пирки, çул-йĕр çинче кашнинех хăйне йĕркеллĕ тытмалли пирки тепĕр хут аса илтерес килет.

**С. ИВАНОВ, патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн районти уйрăмĕн пуçлăхĕ.**

Редакци почтинчен

# Пултаруллă ачасем

Эпĕ Ярапайкассинчи вăтам шкулта 8 класра вĕренетĕп. Хаçата хамăр класри пултаруллă ачасем пирки çырса пĕлтерес терĕм. Вĕсем район тата республика шайĕнчи чылай мероприятие хутшăнса шкул чысне хӳтĕлеççĕ. Дима Костинпа Коля Андреев спорт енĕпе маттур. Уроксем хыççăн вĕсем яланах тренировкăра. Лена Иванова хитре ӳкернĕрен тăтăшах ӳкерчĕксен конкурсĕсене хутшăнать. Таня Силовăпа Инна Сорокина вара олимпиадăсемпе наукăпа практика конференцийĕсене хутшăнаççĕ. Вĕсем иккĕшĕ те «5» паллăпа кăна вĕренеççĕ.

Кăçалхи вĕренӳ çулĕнче Инна чылай конкурсра малти вырăнсем йышăнма пултарчĕ. Кĕркунне республика шайĕнчи спорт кросĕнче те 3-мĕш вырăна тухма пултарчĕ. Шкул ачисен олимпиадин районти тапхăрĕнче чăваш чĕлхипе тата литературипе 1-мĕш, историпе 2-мĕш, акăлчан чĕлхипе 3-мĕш вырăнсене тивĕçрĕ. Кунсăр пуçне Инна тăван тавралăха тĕпчесе республика конкурсĕнче мала тухма пултарчĕ. Пултаруллă тантăш çулсеренех «Excelsior» ăслăлăх конференцийĕнче хутшăнать. Кăçал вăл «Отечество» секцире мала тухрĕ. Таня Силова та тăрăшса вĕренет, шкул пурнăçĕнче активлăхпа палăрса тăрать. Вăл вырăс чĕлхине ытларах килĕштернине район шайĕнчи олимпиадăра 1-мĕш вырăн йышăнни калать. Вырăссен паллă тĕпчевçи М. Ломоносова халалланă интернет-викторинăра та çĕнтерӳçĕ пулма тивĕçрĕ. «Excelsior» ăслăлăх конференцийĕнче «Вырăс чĕлхи» секцире 3-мĕш вырăна тухрĕ. Таня ташă ушкăнне те çӳрет. Кашни çулах районти бал ташшисен «На волнах дружбы» конкурса хутшăнать. Кăçал Рома Соколовпа мăшăррăн ташласа 3-мĕш вырăн йышăнма пултарчĕç.

Эпир – саккăрмĕшсем – туслă та пултаруллă ачасем. Малашне те çакăн пек пулма тăрăшăпăр.

**Е. ИВАНОВА, Ярапайкассинчи вăтам шкулта 8 класра вĕренекен.**

Спорт

# Аслă Çĕнтерĕве халалласа – ăмăрту

Апрелĕн 25-мĕшĕнче районти вăтам шкулсенче тата Муркашри лицейра вĕренекенсен пĕчĕк калибрлă винтовкăран тĕл пересси пе ăмăртнă. Çак ăмăртăва Аслă Çĕнтерĕве халалласа ирттернĕ. 14 шкулăн командисенчен тĕл перессипе Муркашри вăтам шкулти çамрăксем (ертӳçи В. Львов) палăрнă – 1-мĕш вырăн йышăннă. Хыççăнхи вырăнсенче – Оринкинти (ертӳçи А. Григорьев) тата Нискассинчи (ертӳçи Ю. Усов) вăтам шкулсен командисем.

Шкулсенче районти çамрăк техниксен станцийĕн хушма пĕлӳ паракан педагогĕсем пăшал перекенсен кружокĕсене те ертсе пыраççĕ. Çав кружоксене çӳрекенсем те пĕчĕк калибрлă винтовкăран тата пневматика винтовкинчен тĕл пересси пе ăмăртнă. Ку ăмăртура шкул ачисен 5 тĕрлĕ ĕç пурнăçлама тивнĕ. Çапах та мала Муркашсемех тухма пултарнă. Иккĕмĕш тата виççĕмĕш вырăнсенче – Оринкинсем тата Мăн Сĕнтĕрсем (ертӳçи И. Семенов).

Ăмăртусенче тĕл перекенсене уйрăммăн та палăртнă. Вĕсенчен ытларахăшĕ – маларах асăннă шкулсенче вĕренекенсем.

**Хамăр инф.**

Объявление

**Уведомление – объявление о начале общественного обсуждения Предварительного варианта материалов по оценке воздействия на окружающую среду в составе завершения разработки проектной документации «Строительство Чебоксарской ГЭС на реке Волга в части, касающейся поднятия уровня Чебоксарского водохранилища до отметки нормального подпорного уровня 68,0 метров»**

В соответствии с порядком, установленным "Положением об оценке воздействия намечаемой хозяйственной и иной деятельности на окружающую среду в Российской Федерации", утвержденным приказом Госкомэкологии РФ от 16.05.2000 №372, органы местного самоуправления Чувашской Республики совместно с ОАО "ИЦЭ Поволжья" - исполнителем работ по оценке воздействия на окружающую среду (далее - ОВОС), в рамках второго этапа ОВОС начинают общественное обсуждение Предварительного варианта материалов по ОВОС в составе завершения разработки проектной документации "Строительство Чебоксарской ГЭС на реке Волга в части, касающейся поднятия уровня Чебоксарского водохранилища до отметки нормального подпорного уровня 68,0 метров" (далее - Предварительный вариант материалов по ОВОС).

Предварительный вариант материалов по ОВОС размещен 28 апреля 2012 года на официальном интернет-сайте ОАО "ИЦЭ Поволжья" www.ntc-volga.ru и в открытой общественной приемной по адресу: Моргаушский район, с.Моргауши, ул. Мира, 6, каб.201.

Комментарии, предложения и замечания заинтересованной общественности к Предварительному варианту материалов по ОВОС принимаются в течение 30 календарных дней с момента их размещения в письменном виде в открытой общественной приемной или по адресу: ОАО "ИЦЭ Поволжья", 443010, г.Самара, ул.Красноармейская, д.1, офисный центр "Волга-Плаза", 6 этаж, комн. 610.

Общественные слушания пройдут 05.06.2012 в 15.30 часов по адресу: Чувашская Республика, с.Моргауши, ул. Мира, д.6, большой зал заседаний администрации Моргаушского района.

# Кил тата хушма хуçалăх



## «Патшалăх пулăшăвĕ вырăнлă пулчĕ»



**Уркенмен ăста пулнă**

«Ялта пурăнаканăн йăлтах пур. Ма пурăнмалла мар вĕсен», – тесе ăмсанаççĕ тепĕр чух хула çыннисем. Çак сăмахсенченех манăн Юрий Разинович Егоровпа калаçу пуçланчĕ. Мăшăрĕпе Ольга Константиновнăпа тата Евгенийпе Кирилл ывăлĕсемпе вĕсем Йÿçкасси ял тăрăхĕнчи Вăрманкасси ялĕнче пурăнаççĕ. Хăйсем суйласа илнĕ пурнăç çулĕнче вĕсем хресченсем те, сутуçăсем те. Паянхи кун сăмахĕсемпе каласан Ольăпа Юрийăн хăйсен хресчен (фермер) хуçалăхĕ.

– Пурăнан пурнăçри çĕнĕлĕхсене вăхăтра шыраса тупса алла илмесен, ыранхи кунпа пурăнмасан ялта пурăнма татах та йывăр. Çакна ăнланса 3 çул каялла çĕнĕ ĕç пуçаракансене районти ĕçпе тивĕçтерекен центр урлă патшалăх парса пулăшнă 58 пин тенкĕне илсе хамăрăн хресчен (фермер) хуçалăхне çул патăмăр. Хамăр та вăй питти, ывăлсем те ĕçлеме пултараççĕ. Çакна шута илсе пĕр гектара çитернĕ килти хушма хуçалăхра çĕр улмисĕр пуçне тĕрлĕ пахча çимĕç, çырлапа пан улми туса илме пуçларăмăр, – сăмах вакլама ÿркенмесĕр калаçрĕ мана шултра сухан сĕнсе Юрий Разинович **(сăн ÿкерчĕкре)**.

Патшалăх пулăшăвĕпе хресчен (фермер) хуçалăхне çул панă мăшăр ÿсен-тăран отраслĕсĕр пуçне чăхчĕппе ĕçлесси çине те çулленех пысăк тимлĕх уйăрать. Çу каçа вĕсен хуçалăхĕнче чăххи-чĕппи те, хурĕсемпе кăвакалĕсем те йышлă.

– Кĕр çитсен йăлтах хамăр çисе пĕтерейместпĕр ĕнтĕ. Çавăнпа та туса илнĕ кайăк-кĕшĕк продукцийĕпе тăтăшах пасарсене çÿретпĕр, – калаçăва хутшăнчĕ Ольга Константиновна.

Хресчен (фермер) хуçалăхĕ йĕркеленĕскерсем паян ял çыннисене пахча çимĕç сĕннисĕр пуçне нумай çул ÿсекен тĕрлĕ курăксен вăрлăхне те сутаççĕ. Кашни ĕçĕн хăйĕн вăхăчĕ. Паян ялта пурăнаканăн кашни кил хуçалăхрах çур аки пырать. Çавăнпа та Ольăпа Юрий Егоровсен сентрисем патĕнчен халăх татăлмасть. Çакна ăнланмалла та.

**А. БЕЛОВ.**
**Автор сăн ÿкерчĕкĕ.**

**Пахчаçăн уйăх календарĕ**

## Çу уйăхĕ çуллана кĕтет

Çут çанталăк уттипе тан пырса сисместпĕр çу уйăхне кĕтĕмĕр. Çак тапхăр пĕтĕм тавралăхшăн хăйне евĕр уяв. Ăшă çитнипе тата аслатиллĕ çумăрсем çуса иртнĕ хыççăн пĕтĕм тавралăх чĕрĕлет. Ку уйăх ялти сад ĕрчетекенсемпе пахчаçăсемшĕн те çанă тавăрсах ĕçе кÿлĕнмелли вăхăт. Чечеке ларнă улмуççисемпе чие йывăççисем тата сливăсемпе грушăсем ыранхи кунпа пурăнакан ял çыннине паян сад-пахчаран та кĕртмеççĕ.

Килти хушма хуçалăх тытакансем çу уйăхĕн пуçламăшĕнче усă çĕре кишĕр, çарăк, редис, çурхи ыхра акаççĕ-лартаççĕ. Уйăх варринче вара ял çынни çĕр улми анисем сухалаттарать, нимене пухăнса «иккĕмĕш çăкăр» лартать. Уйăх вĕçленнĕ тĕле йăрансем çинче хăяр та, помидор та, пăрăçпала купăста та, хĕрлĕ кăшман, фасоль, çĕр çырли, сельдерей, суханпа эмел курăкĕсем вырăн тупаççĕ.

Халăх сăнавĕнчен. Çу уйăхĕнче икĕ сивĕ пулать: пĕри – çĕмĕрт чечеке ларнă чух, тепри – юман сарăлнă вăхăтра. Çу уйăхĕ çумăрлă пулсан, авăн уйăхĕ типĕрех килет. Нÿрĕкпе пуян çу уйăхĕ хыççăн шăрăх çĕртмене кĕт. Çу уйăхĕ сивĕ тăни – кĕлет çăкăрпа пирĕн пуласса.

**Çу уйăхĕн 5 – 7-мĕшĕсем.** Йывăççисемпе тĕмсене санитари тĕлĕшĕпе касса иртме юрамасть. Ÿсен-тăрана акасран, лартасран, куçарса лартасран тытăнса тăмалла. Унччен акнă калчасене çумран иртме, сайралатма меллĕ. Çĕре кăпкалатни, сад-пахча тавраршĕнчи ăпăр-тапăра пуçтарса тирпейлени, йăрансем хатĕрлени юрăхлă.

**Çу уйăхĕн 7 – 9-мĕшĕсем.** Çĕре сухалама, кăпкалатма юрать. Хресченсем тымар çимĕç акма тытăнаççĕ. Теплицăсемпе парниксене малarах усă курмашкăн редис, дайкон, çарăк акаççĕ. Ир пулакан çĕр улми лартма та вăхăт. «Иккĕмĕш çăкăрпа» пĕрле фасоль тата пăрçа йышши культурăсем акни-лартни çĕре азотпа пуянлатма пулăшать, колорадо нăррисене хăвалать. Улмуççисемпе çырла тĕмсене сăтăрçăсемпе чир-чĕртен кĕрешсе имçампа пĕрĕхмелле. Груша, улмуççи, чие, слива, ирга, жимолость, роза хунавĕсене вырăнлă лартма меллĕ.

**Çу уйăхĕн 9 – 11-мĕшĕсем.** Çум курăкĕпе кĕрешмелли чи меллĕ вăхăт. Калчасене сайралатни, вĕсене минераллă удобренипе апатлантарни лайăх. Сельдерей, çĕр улми, тĕрлĕрен тымар çимĕç акма-лартма юрать. Халĕ севок-сухан, çурхи ыхра лартни – пысăк тухăç никĕсĕ.

**Çу уйăхĕн 11 – 13-мĕшĕсем.** Лартма-акма юрăхсăр кунсем. Ĕçĕсем вара унсăр та çителĕклех. Улмаçырла йывăççисемпе çырла тĕмсене сăтăрçăсенчен тата чир-чĕртен имçамлама васкăр. Улмуççисемпе çырла тĕмсем тавра тислĕк çĕрĕкне сапаласа хума юрать. Хыççăн кунти çĕре кĕреçепе пусса хурсан аван. Йăрансене çумран иртĕр.

**Çу уйăхĕн 13 – 16-мĕшĕсем.** Садра йывăçсем лартма тата вĕсен турттисене иртме тăхтăр. Çак кунсенче ÿсен-тăрансене шăварни тата минераллă удобренисемпе апатлантарни çитет. Çĕр улми, çурхи ыхра, редис, çарăк, хĕрлĕ кăшман, кишĕр, петрушка, сельдерей акни-лартни лайăх тухăçа çаврăнĕ. Помидор, пăрăç, баклажан, хăяр калчисене теплицăсене лартма юрать. Çум курăкпе кĕрешмелле. Çĕр çырлине комплекслă удобренипе апатлантармалла.

**Çу уйăхĕн 16 – 18-мĕшĕсем.** Анасене сухалама тата кăпкалатма юрать. Ÿсен-тăрансен сăтăрçисемпе тата чирĕсемпе кĕрешме питĕ меллĕ тапхăр. Пахча çимĕç культурисене шăварни тата апатлантарни юрăхлă ĕç. Улмуççисемпе çырла тĕмсене те апатлантармалла. Малтанхи симĕс çимĕçсене пуçтарса тирпейлемелле. Çак кунсенче улмуççисемпе çырла йывăççисен турттисене санитари тĕлĕшпе иртсен лайăх пулмалла.

**Çу уйăхĕн 18 – 20-мĕшĕсем.** Калчалантарнă çĕр улми вăрлăхне лартма лайăх кунсем. Халĕ çурхи ыхра, редис, çарăк, хĕрлĕ кăшман, кишĕр, петрушка, сельдерей акни-лартни кил хуçине вăхăт иртсен лайăх тухăçпа савăнтарĕ. Сухана, ыхрана, тымар çимĕçе апатлантарни те тухăça ÿстерме пулăшĕ çеç. Çак кунсенче лартнă улма-çырла йывăççисен хунавĕсем лайăх чĕрĕлеççĕ.

**Çу уйăхĕн 20 – 22-мĕшĕсем.** Садра йывăçсем лартма, куçарса лартма тата вĕсен турттисене иртме тăхтăр. Йăрансене кăпкалатма, çумсенчен иртме, сăтăрçăсемпе кĕрешме лайăх тапхăр.

**Çу уйăхĕн 22 – 23-мĕшĕсем.** Хĕл каçа вилнĕ çĕр çырлисем вырăнне çĕнĕ тĕмсем лартмалла. Улмаçырла йывăççисене сăтăрçăсемпе чир-чĕртен имçамламалла. Чечексем лартмалла, пайламалла тата апатлантармалла. Явăнса ÿсекен фасоль калчисене йăрансем çине вырнаçтармалла. Кирлĕ пулсан розăсене куçарса лартма юрать. Нумай çул ÿсекен чечексен тымарĕсене пайлама пулать. Уйăх календарĕпе килĕшÿллĕн çак кунсенче лартнă улма-çырла йывăççисен хунавĕсем малалла лайăх аталанаççĕ.

**Çу уйăхĕн 23 – 26-мĕшĕсем.** Садпахчари йывăççисемпе тĕмсене касса иртме тăхтăр. Пахча çимĕçсене тата йывăççисемпе тĕмсене шăварма, минераллă удобренисемпе апатлантарма ăнăçлă кунсем. Хăяр, мăн хăяр вăррисене ислетме хума тата çутă хут айне туса акма юрăхлă кунсем. Кая юлса пулакан купăстана лартма васкăр.

**Çу уйăхĕн 26 – 28-мĕшĕсем.** Çĕрпе ĕçлеме юрать. Калчасене сайралатмалла. Йăрансене çумран иртмелле, сăтăрçăсемпе тата чир-чĕрпе кĕрешмелле. Шăрăха тÿсĕмлĕ чечексене акма тата лартма юрать: илемлĕ фасоль, хăмла, виноград т. ыт. те. Çак кунсенче акнă курăк тикĕс шăтнипе палăрса тăрать. Пухнă эмел курăкĕсен вăйĕ те нумайрах.

**Çу уйăхĕн 28 – 30-мĕшĕсем.** Çĕр çырли йăранĕсем çинче ытларах ĕçлĕр. Нумай çул ÿсекен чечек культурисене хунаттарма ансат. Вĕсене минераллă удобренисемпе апатлантарни вырăнлă. Пĕр çул ÿсекен чечексене те акма юрать. Пахчара илемлĕ чечексенчен чĕрĕ карта тума ан ÿркенĕр. Пÿлĕмре ÿсекен чечексене балконсем çине кăларни те усăллă.

**Килте трактор тытакансене пĕлме**

## «Частник» операци кам валли?

**Уйăх каялла килти хушма хуçалăхра ĕçлеме МТЗ-80 трактор туянтăмăр. Юсавлăскерне «Частник» операципе мĕн тĕллевпе тĕрĕслеме пултарĕç-ши?**
**Хаçата ыйтса çырнинчен.**

***Хаçат вулакан çырăвĕпе Чăваш Республикинчи Патшалăх техника надзорĕн районти инспекторне С. НИКОЛАЕВА паллаштартăмăр. Технадзор специалисчĕ панă интервьюпа паян сире паллашма сĕнетпĕр.***

**– Сергей Александрович, чăнах килти хушма хуçалăхсенче трактор тытакансем тĕлĕшпе пăхнă операци-и ку?**

– «Частник» профилактика операцийĕн ячĕ хăйех ăна камсем валли иртterни пирки калать. Районта пурăнакансен харпăрлăхĕнче ытти техникăпа пĕрлех юлашки вăхăтра тракторсемпе прицепсем те самаях нумайланчĕç. Вĕсен пысăк пайĕ çур акире те активлăхпа палăрать. Çавна шута илсе Чăваш Республикин хăй тĕллĕн çÿрекен транспортпа ытти техникăна пăхса тăракан Патшалăх инспекцийĕ ака уйăхĕн 23-мĕшĕнчен пуçласа çу уйăхĕн 25-мĕшĕччен ятарлă мероприяти – «Частник» операци – ирттерессе пирки пĕлтерчĕ.

Çак тапхăрта килти хушма хуçалăхсенче уйрăм харпăрлăхра тытакан тракторсем тĕлĕшпе тимлĕх пысăкрах пулĕ. Трактористсем хăрушсăрлăх правилисене тата пушар хăрушсăрлăхне епле пăхăннине, усă курма май çук таран кивелнĕ техникăна учетран кăларассипе тата хальтерех туяннă техникăна çĕнĕ хуçисем учета тăратассипе мĕнле позици йышăннине, тракторсем черетлĕ техника тĕрĕслевĕ витĕр тухнипе тухманнине çирĕп пăхăпăр.

**– Ытти çулсенчи çакнашкал тĕрĕслевсем тракторпа ĕçлекенсем хушшинче тата вĕсен харпăрлăх хуçисем техникăпа усă курас правилăсене пăхăнассинче мĕнлерех лару-тăру пулнине кăтартса пачĕç?**

– Сирĕн ыйтăвăрпа килĕштĕп. Çынсен харпăрлăхĕнче техника хатĕрĕсем йышланни пирĕн халăхăн пурнăç шайĕ ÿснине çирĕплетет. Ку лайăх, анчах пурнăç шайĕ хăпарнипе пĕрлех яваплăха ÿстерни те ытлашши пулмĕччĕ. Çакă «Частник» профилактика операцийĕнче çулленех аван курăнать. Паянхи куна районти уйрăм граждансен харпăрлăхĕсенче тракторсем пурĕ 525, вĕсен прицепĕсем 156 единица шутланаççĕ. Асăннă техника хресченĕсĕн пысăк тĕкĕ пулса тăнине ялта пурăнакансем асăрханах. Куратăр пулĕ, хресчен туйăмĕллĕ ял çынни çĕр ĕçĕ ĕçлеме ытларах та ытларах техника туянать, унăн пулăшăвĕпе усă курать. Вĕсем хăрушсăрлăх правилисене пăхăнни вара уйрăм ыйту.

**– Иртнĕ çулсенчи уйăхлăхсем вăхăтĕнче харпăрлăхра трактор тытакан граждансем йĕрке пăснине тупса палăртнă тĕслĕхсем мĕн пирки калаççĕ?**

– Йĕркене пăснă тĕслĕхсем сахал тесе калас килмест. Операци пынă тапхăрта пĕлтĕр çес эпир çурхи ака-суха ĕçĕсене хутшăнакан вун-вун трактора чарса тĕрĕслерĕмĕр. Вĕсенчен 13-шĕ патшалăх техника тĕрĕслевне тăмасăрах «ĕçе» тухни палăрчĕ. Çавăнпа та вĕсем трактора эксплуатацилеме ирĕк паракан талонсемсĕрехчĕ. Кунсăр пуçне 9 тĕслĕхре трактористсем çул-йĕр правилисене пăсни, 3 механизатор хăрушсăрлăх техникине пăхăнманни, иккĕшĕ регистраци правилисем çине алă сулни куç умне пулчĕ. Вĕсемпе пĕрлех регистраци докуменчĕсемсĕр 6 трактор çула тухнăччĕ, виççĕшĕнче вара механизаторсем хăйсемпе пĕрле тракторист удостоверенийĕсем «илме мансах» ĕçе кайма тухни палăрчĕ.

Йĕркене уйрăмах сĕмсĕррĕн пăсакансене вара икĕ тĕслĕхрен тракторсене эксплуатацилеме чармах тиврĕ. Вĕсемсĕр пуçне тĕрĕслевсем вăхăтĕнче çул-йĕр, хăрушсăрлăх тата регистраци правилисене пăснăшăн 15 çынна административлă майпа ответ тыттартăмăр.

**А. ПЕТРОВ калаçнă.**

**Пĕлес тенĕччĕ**

## Ăнлантарса парăр, тархасшăн

2010 çул типĕ килчĕ. Çавна май ытти ял хуçалăх культурисемпе пĕрлех килти хуçалăхра çĕр улминчен те пысăк тухăçах илме май килмерĕ. Кайран çуркунне, çынсен лартма çĕр улми вăрлăхĕ çитменнине кура, ялти магазинсенче те ытти регионсенчен çĕр-шывсенчен кÿрсе килнĕ çĕр улми вăрлăхне сутассине йĕркелерĕç. Йÿнĕ хакпа мар, паллах. Килограмне 30-шар тенкĕ те парса туянтăмăр ун чухне.

Эпĕ вара «Зикура» сортлă вăрлăх туяннăччĕ. Ку ăсти сорт пулнине те пĕлместĕп. Ăна лартса çитĕнтерни пирки çавна каласшăн. Кÿршĕсен ку сортлă çĕр улми тухăç параймарĕ. Манăн пахчара вара вăл япăх çитĕнчĕ тесе калама пултараймастăп. Тухăç питĕ пысăк пулчĕ тесе мухтанмастăп, анчах та япăх та теместĕп. Çиме шултрине те пухса кĕртрĕм, вăрлăхлăх та хатĕрлесе хăвартăм.

Хăйĕн пахалăх енĕсемпе ку сорт мана питĕ килĕшрĕ. Ăшалама та, пĕçерме те лайăх. Хуппине шуратсан шăратнă çу пек сап-сарă тĕслĕ. Тути аван.

Анчах та манăн çак сорт пирки тĕплĕнрех пĕлес килет. Ку сорт ыттисенчен мĕнпе уйрăлса тăрать, ăна яровизацилеме хурассипе уйрăмлăхсем çук-и, мĕнле упрамалла, мĕнле тăпрара лартса çитĕнтерсен ытларах тухăç пама пултарать, тарăнрах е ăшăхрах лартмалла-и, çу каçа унăн пуссине мĕнле пăхса тăмалла т. ыт. те.

Хаклă вулакансем, кун пирки эсир пĕлетĕр пулсан тата хаçат урлă каласа пама кăмăл тусан тем пекех тав сăмах каланă пулăттăм. Çитменнине ку сорта пуçласа лартса ÿстерекенсем ял çыннисем хушшинче татах сахал мар тесе шухăшлатăп.

**Раиса СТЕПАНОВА.**

Тивĕш ялĕ.

## Пĕлтерӳсем. Объявления



АктивДеньги®
ООО “АльянсФинанс” Быстрые займы для всех
ЗАЙМЫ
до 40 000 рублей за 15 минут
без залога и поручителей
работаем без выходных
8-927-668-67-87
с.Моргауши, 50 лет Октября 5
г.Канаш, “Центральный рынок”, ул.Московская,д.13
г.Шумерля, ТД ” Огонек”, ул.Октябрьская,дом 8
с.Яльчики, “Сырозавод”, ул.Кооперативная 63
с.Батырево, ТД "Юхма", ул. Дружбы, д.2г
п.Урмары, ТЦ"Универмаг", ул.Ленина,11
так же имеются представительства:
г.Чебоксары 8 адресов
г.Новочебоксарск 2 адреса
Лапсары
пос.Кугеси


## Тав тăватпăр

Пирĕн хаклă аттене, мăшăра, ырă çыннăмăра Геннадий Николаевич Кожевникова юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, пирĕн пысăк хуйхăна тата çухатăва пирĕнпе пĕрле пайланăшăн тĕп больницăри реанимаци уйрăмĕнчи врачсене, сестрасемпе санитаркăсене, Муркашри вăтам шкул коллективне, «Свобода» хуçалăхăн правлени членĕсене, механизаторсене, ял-йыша, пускилсене, тус-юлташсене, тăвансене чун-чĕререн тухакан пысăк тав сăмахĕ калатпăр.

**Кожевниковсен çемйи.**

* * *

**В объявлении собственников земельных долей Матвеева Валерия Васильевича, Матвеева Василия Матвеевича, Шигалевой Елены Анатольевны о выделении земельных участков в счет земельных долей, опубликованном в райгазете «Çĕнтерӳ ялавĕ» от 14.03.2012 г. № 19 (7980), допущены опечатки. Вместо «кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:250801:1 « следует читать кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:02100:316 и дополнить фамилию заказчика проекта межевания Шигалевой Оксаны Владимировны, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Хоп-Кибер, ул. Онис Эки, д. 28.**


МЦФ Межрегиональный центр финансирования
www.mcf21.ru
69-3-75, 8-967-473-61-21
ООО “Межрегиональный Центр Финансирования”
БЫСТРЫЕ ЗАЙМЫ на любые цели
› низкие % ставки (от 3% до 5%) в месяц от остатка суммы займа
› ДЛЯ ПОКУПКИ И СТРОИТЕЛЬСТВА ЖИЛЬЯ ПОД МАТЕРИНСКИЙ КАПИТАЛ
ЛЬГОТНЫЕ ЗАЙМЫ НА РАЗВИТИЕ ЛИЧНОГО ПОДСОБНОГО ХОЗЯЙСТВА
Акция действует до 31.05.2012 г.
Моргаушский район, с. Большой Сундырь, ул. Советская, 16


Проекты зданий и инд. домов, электро-, водо- и газоснабжения, сметы. Свид. СРО. ООО «Инттехс», с. Моргауши, ул. Мира, 9А. Тел.: 62-6-03.

* * *

**ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА от производителя. Замер. Доставка бесплатно. Низкие цены. Тел.: 8-987-576-65-62.** 6-10.

**Продаю трактор Т-30, плуг, косилку, нож, картофелесажалку, прицеп, культиватор, горох, рожь, пшеницу, семена картофеля. Тел.: 8-927-847-20-55, 8-952-021-75-90.**

* * *

**Продаю: кирпич одинарный М-100; М-125; М-150; керамический полуторный М-125; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк, некондиция, гравмассу, керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы. Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352)44-20-97.** 10-10.

* * *

**Ĕне, вăкăр, пăру, сурăх туянатăп. Тел.: 8-905-343-60-63.** 6-10.

* * *

**Магазин «Сельхоззапчасти» реализует: запасные части к тракторам и сельхозагрегатам. Адрес: д. Юнгапоси. Тел.: 8-937-372-02-15, 8-927-859-69-93.** 10-16.

* * *

**Продаем пропаренные керамзитобетонные блоки, цемент, песок речной, гравмассу, керамзит. Требуется водитель на автомобиль ГАЗ-53Б. Адрес: с. Моргауши, «Агропромснаб». Тел.: 8-905-340-07-78.** 5-10.

* * *

**Продаю с доставкой: кирпич керамический, силикатный (любых цветов); блоки керамзитобетонные, газосиликатные, фундаментные, пеноблоки; кольца колодезные; трубы асбесто-цементные, профильные; арматура, цемент, сухие смеси, шифер, рубероид, профнастил, пиломатериалы. Металлоконструкции: гаражные ворота, калитка, забор, беседка, теплица, козырьки (навесы), решетки, кладочные сетки, печи, мангал, скамейки и т. п. Услуги крана-манипулятора. Тел.: 8-903-357-4675, 8-927-880-0483.** 3-10.

* * *

**Продается земельный участок 40 сот., д. Ярославка. Тел.: 8-927-866-45-03.**

* * *

**Продается косилка сегментная, ширина захвата 1,5м., по договорной цене. Тел.: 8-927-857-61-81.**

* * *

**Ĕнесем, вăкăр, тына, пăрусем, сурăхсем туянатпăр. Тел.: 8-987-665-02-13.** 2-2.

* * *

**Çĕр улми вăрлăхĕ («рамона», «удача»), тăваткал тюкри утă сутатпăр. Тел.: 8-905-199-61-77.** 4-5.

* * *

**Строительной компании г. Н. Новгород требуются строители: каменщики, плотники, отделочники, монолитчики и разнорабочие. Жилье и питание предоставляются. Зарплата от 25000 рублей. Тел.: 8-953-449-42-84, 8-908-734-55-26. Александр.**

* * *

**Продается черно-пестрая корова, пятый отел. Срок – 3 июня. Адрес: д. Шупоси, ул. Центральная, д. 38. Тел.: 8-937-370-54-48.** 2-2.







**ТЕПЛИЦЫ** от производителя из сотового поликарбоната 3х6, 3х8 и т. д. Телефоны: 8-917-651-00-76, 8-927-858-28-79.


ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА
Немецкое качество
Окна STAR
6-камерный профиль ПО ЦЕНЕ 3-камерного
скидки до 35%
подробности по телефонам:
8-9603101816
Пенсионерам доп. скидки
Офис продаж в здании рынка с.Моргауши
Окна стали дешевле...




**29 апреля из деревни Хорной пропала собака – ротвейлер, кобель, 8 лет, темно-коричневый, без ошейника, без хвоста, кличка «ТРЭД». Нашедшему вознаграждение 5000 рублей. Тел.: 8-927-666-97-01, 8-919-669-52-50.**

**СПУТНИКОВЫЕ АНТЕННЫ 2500 руб. РАССРОЧКА. ТРИКОЛОР. ТЕЛЕКАРТА. Тел.: 8-905-345-77-19.** 6-10.

В Москву и Московскую обл. требуются **ФАСОВЩИЦЫ, ГРУЗЧИКИ**. Питание, проживание — БЕСПЛАТНО. Вахта. Выезд группами до предприятия. Гарантии. З/п 25 000-35 000 руб. **Тел.:8(8352)29-80-30, 29-50-30** 4-5.

**11 мая с 8 часов в районном Доме культуры Ульяновская обувная фабрика проводит выставку-продажу трикотажа и обуви из натуральной кожи производителей г. Ульяновск, Москва.**

**ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА от производителя, срок изготовления от 3 до 5 дней. Кредит, рассрочка, скидка до 35%, пенсионерам дополнительная скидка. Замер и доставка бесплатно. Прием заказов: с. Моргауши, ул. Гагарина, 16А (здание котельной). Тел.: 8-917-662-71-65, 8-917-655-96-77.** 1-3.










## Прогноз погоды

| | суббота 5 мая | | | | воскресенье 6 мая | | | | понедельник 7 мая | | | | вторник 8 мая | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °C | +2 | +9 | +13 | +10 | +10 | +17 | +21 | +13 | +9 | +17 | +24 | +18 | +14 | +22 | +25 | +18 |
| Давление мм | 748 | 750 | 749 | 747 | 743 | 742 | 745 | 747 | 750 | 750 | 749 | 748 | 749 | 750 | 749 | 750 |
| Влажность % | 83 | 47 | 40 | 56 | 74 | 77 | 58 | 81 | 91 | 72 | 52 | 63 | 63 | 46 | 40 | 72 |
| Ветер м/сек | 3 | 1 | 1 | 4 | 6 | 6 | 6 | 3 | 2 | 5 | 3 | 3 | 3 | 4 | 4 | 2 |
| | С-З | С-В | Ю-В | Ю-В | Ю | З | С-З | С | С-В | Ю-В | Ю | Ю | Ю | Ю-З | Ю-З | Ю-З |
| Солнце восход / заход | | 04:58 | 20:40 | | | 04:56 | 20:42 | | | 04:54 | 20:44 | | | 04:52 | 20:46 | |
| Луна восход / заход | | 20:06 | 04:14 | | | 21:34 | 04:44 | | | 22:53 | 05:25 | | | 23:56 | 06:18 | |
| фаза | | | | | | | | | | | | | | | | |

## Михаил Яковлевич ГАВРИЛОВ



Майăн 1-мĕшĕнче пирĕн ентешĕмĕр, вăрçă ветеранĕ Михаил Яковлевич Гаврилов 88 çула кайса пирĕнтен ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайрĕ. М.Я. Гаврилов Юнкă ялĕнче 1924 çулхи октябрĕн 20-мĕшĕнче çуралнă.

1942 çулта Етĕрнери педучилище пĕтернĕ хыççăн вăл Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине тухса кайнă. Çĕнтерӳ кунне кĕтсе илнĕ Юнкă каччи тепĕр çултан вырăнти шкулта пуçламăш классене вĕрентме тытăннă. Хастар ĕçĕпе хисепе тивĕçнĕ учитель каярах Калайкассинчи çичĕ çул вĕренмелли шкулăн директорĕнче, Муркашри тата Юнкăри вăтам шкулсенче вăй хунă.

1969 çултанпа М. Гавриловăн пурнăçĕ Шуршăлпа çыхăннă. Кунти вăтам шкулта директорта 2001 çулччен ĕçлет. Сĕнтĕрвăрри районĕнче ĕçленĕ çулсенче «ЧАССР тава тивĕçлĕ учителĕ», «РСФСР тава тивĕçлĕ учителĕ» ятсем илме тивĕç пулать.

3 степень Мухтав орденне, Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин 1 степень орденне тата патшалăхăн ытти сумлă наградисене тивĕçнĕ вăл.

Ырми-канми тăрăшакан учитель 1970 çулта А. Николаев летчик-космонавтăн тăван ялĕнче – Шуршăлта – Космонавтика музейне уçассине пуçаруçă пулать.

Мускавра Çĕнтерӳ парадне пĕрре мар хутшăннă М. Гаврилов район хаçачĕпе те тачă çыхăну тытса тăнă. Вăл çырнă материалсем учительсемпе вĕренекенсемшĕн те, тавра пĕлӳçĕсемшĕн те питĕ паха пулнă.

Михаил Яковлевичăн ырă ĕçĕсене эпир нихăçан та манмастпăр. Унăн таса сăнарĕ пирĕн чĕресенче упранĕ.

**Юлташĕсен ушкăнĕ.**

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11.** 10-10.

**Продаю песок, гравмассу, бой кирпича, керамзитоблоки, с доставкой. Тел.: 67-66-95, 8-905-347-99-15.** 2-5.

* * *

**ГРАВМАССА, ЩЕБЕНЬ (доломитовый, гранитный, известковый), КЕРАМЗИТ, ПЕСОК (речной, карьерный), БЕТОН с доставкой до 30 т. за 1 рейс. Тел.: 8-927-668-70-15, 38-70-15.** 1-18.

Отдел образования, молодежной политики, физической культуры и спорта администрации Моргаушского района и Совет Моргаушской районной организации профсоюза работников народного образования и науки РФ выражают глубокое соболезнование Анисовой Г.М., директору МАОУ ДОД «Моргаушская детская школа искусств им Ф.С. Васильева» по поводу безвременной кончины **МУЖА**.

Отдел образования, молодежной политики, физической культуры и спорта администрации Моргаушского района и Совет Моргаушской районной организации профсоюза работников народного образования и науки РФ выражают глубокое соболезнование родным и близким по поводу безвременной кончины ветерана педагогического труда, участника Великой Отечественной войны **ГАВРИЛОВА Михаила Яковлевича.**

Отдел образования, молодежной политики, физической культуры и спорта администрации Моргаушского района и Совет Моргаушской районной организации профсоюза работников народного образования и науки РФ выражают глубокое соболезнование родным и близким по поводу безвременной кончины учителя начальных классов МБОУ «Москакасинская средняя общеобразовательная школа» **КУПЦОВОЙ Светланы Александровны.**

Муркашри вăтам шкул коллективĕ кунта хими предметне вĕрентекен Г.В. Андреевăн **ПИЧЧĔШĔ** вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланнине пĕлтерет.

МУП ЖКХ «Моргаушское» выражает глубокое соболезнование оператору очистных сооружений МУП ЖКХ «Моргаушское» Купцову В.А. в связи с невосполнимой утратой – смертью супруги **КУПЦОВОЙ Светланы Александровны.**

Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкул коллективĕ кунта акăлчан чĕлхи вĕрентекен Л.В. Ванюшкинăн ашшĕ **Валерий Николаевич ХРАМОВ** вăхăтсăр вилсе кайнă пирки тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Хаçатăн çитес номерĕ майăн 12-мĕшĕнче тухать.


Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36. E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 2 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Волкова А.И.
Пичете панă 04.05.2012 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин., чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4634.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.